# Çĕршывăн пĕрремĕш президентне 24 çул каялла шăп Раççей кунĕнче суйланă • 2 стр.

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр... Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*


ХЫПАР

# Чăваш ХĔРАРĂМĔ

1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

22 (892) №, 2015, июнь/çĕртме, 11

Хакĕ ирĕклĕ.

16+

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.



• Чăваш хĕрне çĕнтерме Марокко принцĕ пулăшнă — 3 стр.

• Мĕнле вĕрентекен вăл – Мария Ивановна? — 4 стр.

• "Шанхай" историйĕ. Малалли пулать... — 5 стр.

• Юратмалли упăшка — 9 стр.

• Паллă артисткăн ыратăвĕ тата юратăвĕ — 10 стр.

• Савăшу чемпионĕсем... Чĕрчунсен тата хурт-кăпшанкă тĕнчи — 11 стр.


## Саламлатăп!

**Хаклă ентешĕмсем!**
**Сире Раççей кунĕ ячĕпе чĕререн саламлатăп!**

Июнĕн 12-мĕшĕ – Раççейĕн кашни çыннишĕн ыттисенчен уйрăлса тăракан уяв. Çĕршывăн çĕнĕ историйĕн тапхăрĕнче çуралнăскер, вăл пĕтĕм наци пĕрлĕхне, халăхăн ăс-хакăлпа культура йăлийĕрки ăруран-ăрăва куçса пынине, патриотизма, Тăван çĕршыв шăпипе çыхăннă гражданла яваплăха сăнарлать.

Эпир Раççее юрататпăр, унăн нумай ĕмĕре тăсăлакан историйĕпе тата культурипе мăнаçланатпăр, ăслă асаттесен пуян еткерне тирпейлĕ упратпăр, çав вăхăтрах эпир прогрессивлă тата çĕнĕ мĕнпур пулăм валли уçă.

Юратнă Тăван çĕршывăмăрăн паянхи пурнăçĕ тата малашлăхĕ пирĕнтен кашнин ĕçĕнчен, пуçарулăхĕнчен килеççĕ. Иккĕленместĕп: пĕрле эпир унăн чапĕпе сумне татах та çĕклеме, хамăрăн чи çутă ĕмĕтсене пурнăçлама, демократие çирĕплетес, экономикăна тата социаллă сферăна калкал аталантарас тĕллевлĕ мĕнпур пуçарура ăнăçу тума пултаратпăр.

Чăваш Енре пурăнакансене хамăрăн пĕрлехи килĕмĕрте – Раççей Федерацийĕнче – çирĕп сывлăх, телей, ырлăх, килĕшӳлĕхпе тăнăçлăх сунатăп.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăха пурнăçлакан М.ИГНАТЬЕВ.**

**"Хыпар" Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2015 çулăн II çурринче илсе тăмашкăн Раççей почтин мĕнпур уйрăмĕнче çырăнтараççĕ.**

## ÇАНТАЛĂК

| | кăнтăрла | çĕрле | |
|---|---|---|---|
| 11.06 | + 17 | + 13 | |
| 12.06 | + 17 | + 12 | |
| 13.06 | + 18 | + 15 | |
| 14.06 | + 25 | + 20 | |
| 15.06 | + 28 | + 21 | |
| 16.06 | + 31 | + 19 | |
| 17.06 | + 31 | + 23 | |




# «Анне, сана кĕтрĕм...»

**Урамра вылякан тăваттăри Вероника ĕçрен таврăнакан амăшне чупса пырса ыталаса илчĕ. Йăл кулăпа çиçекен хĕрача пĕр вĕçĕм чуптăвать ăна. Телейлĕскерсене куç илми сăнас килет. «Анне, ăçта пулнă эсĕ? Эпĕ сана кунĕпех кĕтрĕм», – чĕвĕлтетет хĕрпĕрчи. Кăштахран манпа та кăсăкланма пуçларĕ. Унăн шухăшĕпе, пирĕн малах паллашмалла пулнă. Эпĕ вара Етĕрне районĕнчи Урташ тăрăхне халь тин çитсе тухрăм. Хăнасене хапăл Вероникăпа çийĕнчех пĕр чĕлхе тупрăмăр. Вăл мана хăйĕнпе пĕрле выляма чĕнчĕ.**

**Юрий Игнатьевич хĕрĕсем валли икĕ чуччу çакса панă. Анжелăпа Вероника пĕр харăсах ярăнчăр тенĕ ĕнтĕ.**

ТĂНĂÇЛĂХПА КИЛĔШЎ КУНĔ

# Раççей Гимнне пурте пĕрле юрлăпăр





Çĕртме уйăхĕн 12-мĕшĕнче пирĕн çĕршыв Раççей кунне паллă тăвать. Çĕршыври чи çамрăк уявсенчен пĕри 2002 çулчен Раççей патшалăх суверенитечĕн Декларацине йышăннă кун пек палăрнă.

1994 çулта Борис Ельцин, Раççей Федерацийĕн пĕрремĕш Президенчĕ пулнă май, указа алă пуснă. Унпа килĕшўллĕн Раççей патшалăх суверенитечĕн Декларацине йышăннă кун сумĕ, пĕлтерĕшĕ ўснĕ. Конституципе саккун та патшалăхăн тĕп шăнăрĕ пулса тăнă.

Документне вара тăвата çул маларахах – РСФСР халăх депутачĕсен пĕрремĕш съездĕнчех – алă пуснă-ха. Ун чухне Совет Союзĕн республикисем пĕрин хыççăн тепри уйрăлса пынă. Çавăнпах çĕршыв та çĕнĕ ят илнĕ, Раççей Федерацийĕ пулса тăнă. Çакна та палăртмалла: шăпах çулталаскран, 1991 çулхи çĕртме уйăхĕн 12-мĕшĕнче, халăх пĕрремĕш президента – Борис Ельцина – суйланă. Раççейре Никама пăхăнман куна /День независимости/ паллă тума пуçланă.

1994 çулта çак кун патшалăх уявĕ пек палăртнă. Шăпах унран пуçласа çырăнать те истори çĕнĕ тапхăрĕ.

Тĕрĕссипе, çĕртме уйăхĕн 12-мĕшĕ – патшалăхăн тĕп уявĕсенчен пĕри. Чылайăшĕ ăна çĕнĕ тесе шухăшлать. Хăй чăннипех мăнаçлă та вăйлă çĕршыв иккенне çирĕплетме вара Раççей темиçе ĕмĕр каяллах пуçланă.

Раççей никама пăхăнманлăхĕ – несĕлĕмĕрсен хастарлăхĕ, ĕçченлĕхĕ, çирĕплĕхĕ, çухатăвĕ те. Хăйсен пурнăçне шеллемесĕр çĕршыв чиккисене мухтавлăн сыхлакансен пархатарĕ. 1990 çулхи çĕртме 12-мĕшĕнче йышăннă деклараци çĕнелсе чĕрĕлекен Раççей символĕ пулса тăнă.

Уява халăх тĕрлĕрен хакланă. Нумайăшĕшĕн вăл черетлĕ канмалли кун çеç пулса тăнă.

1998 çулта Борис Ельцин çĕртме уйăхĕн 12-мĕшне малашне Раççей кунĕ пек уявлама сĕннĕ. Çĕнĕ ятне официаллă майпа 2002 çулхи нарăсăн 1-мĕшĕнче йышăннă.

Раççей кунĕ – ирĕклĕх, тăнăçлăх, килĕшў уявĕ. Тĕрлĕ наци пĕрлĕхне, туслăхне те çирĕплетет вăл. Паянхи тата ыранхи Раççей умĕнче яваплисем шăпах эпир иккенне палăртать.

Халĕ ку уявра кашни хуларах уяв мероприятийĕсем йĕркелеççĕ: концертсем, спорт ăмăртăвĕсем, куравсем... Тĕп уяв, паллах, Мускаври Хĕрлĕ лапамра иртет. Шăпах çак кун çутçанталăка тухма кăмăллакан та пур.

Раççей паян – тĕнчери чи пысăк патшалăх. Йăла-йĕркене манмасăр, несĕлĕмĕрсене хисеплесе унăн пуласлăхĕ пирки кашнийĕнех шухăшламалла.

Раççей кунне паллă тунă май республикăра та уявсем иртĕç. Каçхи ултă сехетре тĕп хуламăрта пурăнакансемпе хăнасене Хĕрлĕ тўрем пустарĕ. Раççей гимнне пуринпе пĕрле юрлассине те йĕркелĕç.

**Татьяна НАУМОВА.**

ЫЙТĂМ

# Çирĕп йăвана тăшман аркатаймĕ

**Эрнекун, çĕртмен 12-мĕшĕ – Раççей кунĕ. Пирĕн çĕршывра ăна 23-мĕш çул уявлаççĕ. Раççей патшалăх суверенитечĕн Декларацине йышăннă куна халăх мĕнле йышăнать? Çак ыйту тавра республикăри паллă çынсене калаçтарас терĕмĕр.**

**Николай КАЗАКОВ, Чăваш патшалăх филармонийĕн директорĕ:**

– Пирĕншĕн, филармонире ĕçлекенсемшĕн, чăннипех те пысăк уяв.



Тĕп хуламăрта, районсенче иртен пуçласа каçчен концертсем ирттеретпĕр. Часах Республика кунĕ çывхарать. Ăна та анлăн уявлăпăр.

**Вячеслав ОРИНОВ, ЧР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ, режиссер:**

– Канмалли кунсенче пахчара ĕçлеме, тăвансемпе тĕлпулма лайăх пуль-ха. Çапах та эпир Раççейре пурăнатпăр. Чăваш Ен Раççей патшалăхне кĕрет. Апла çак кун пирĕншĕн – уявран та уяв. Ют çĕршывсем, уйрăмах – Америка, Раççее ура хума хăтланни халăх шухăш-кăмăлне тата вăйлатса чĕрере патриот туйăмĕ çуратрĕ пуль тесе шухăшлатăп. Мăнаçлăх туйăмĕ кĕртсе чунсене çирĕплетрĕ. Раççей Президентне Владимир Пу-



тина вăй-хăват сунас килет. Вăл океанри тĕксĕм те çўллĕ хумсене çĕнтерсе пысăк карапа йĕркеллĕ илсе çитересси пирки пĕртте иккĕленместĕп. Раççей кунĕ – чунри туйăмсемпе килĕшсе тăракан уяв.

**Михаил ПЕТРОВ, Патăрьел район пуçлăхĕ, «Малалла» тата «Первомайский» хуçалăхсен ертўçи:**



– Паллах, пысăк уяв ку. Эпир Раççейре, унти саккунсемпе пурăнатпăр. 1990 çулхи çĕртмен 12-мĕшĕнче РСФСР халăх депутачĕсен пĕрремĕш Съездĕнче Раççей патшалăх суверенитечĕн Декларацине йышăннăччĕ. Раççей Федерацийĕн Аслă Канашĕн йышăнăвĕпе килĕшўллĕн 1992 çулхи июнĕн 12-мĕшĕнчен вăл чăн-чăн уяв пулса тăчĕ. Çак кун Раççей Президенчĕ кашни çулах Кремльте РФ Патшалăх премийĕсем парса чыс тăвать. Мускавра, Хĕрлĕ тўремре, пысăк уяв иртет. Туслă пурăнма, килĕштерсе ĕçлеме, пĕр шухăшлă пулма, малалла хастаррăн утма хистет Раççей кунĕ. Çирĕп йăвана нихăçан та тăшман аркатаймĕ.

**Алина ИВАНОВА, Европа тата тĕнче чемпионки:**



– Чунра, паллах, уяв, анчах пирĕншĕн – кану кунĕ мар. Шăпах çĕртмен 12-13-мĕшĕсенче Шупашкарта хăвăрт утассипе Раççей чемпионачĕ иртет. Патшалăх уявĕнче хамăр вăя, çитĕнўсене кăтартăпăр. Эпĕ Раççейре çуралнă, çакăнта ўссе çын пулнă. Тăван çĕршывран хакли, çывăххи çук. Кашнин чун-чĕринчех патриот туйăмĕ пулмалла.

**Валентин ТУКМАКОВ, Патăрьел районĕнчи Çĕнĕ Ахпўрт ял тăрăхĕн пуçлăхĕ:**

– Маншăн чи пысăк уяв – Çĕнтерў кунĕ. Вăл пĕрремĕш вырăнта тăрать. Унпа нимĕн те танлашаймĕ. Тăвата çула тăсăлнă, кашни çемьен алăкне пырса шакканă çав хаяр вăрçă кунĕсене пирĕн те, килес çĕнĕ ăрăвăн та манма юрамасть. Иккĕмĕш вырăнта – Раççей кунĕ. Вăл ахаль кану кунĕпе ниепле те танлашаймĕ. Тăван çĕршыва хамăр юратмасан пире юттисем хисеплĕçи? Кашни çынрах патриотизм туйăмĕ пулмалла. Йывăрлăхра пуçа усмалла



мар. Каччăсен те салтак атти тăхăнмаллах. Вăл чуна çирĕплетет. Салтакра пулнă çын ĕмĕрех хисепре пулнă.

Кризис та парăнтараймарĕ ĕçчен халăха. Çар промышленноçĕ вăйланать, производство аталанать. Пирĕн республика та малалла çирĕппĕн утать. Çĕнĕ Ахпўртре тĕлĕнмелле вăйлă çĕр ĕçченĕсем пурăнаççĕ. Патшалăх нухрат парасса кĕтсе лармаççĕ кунта. Хăйсем тăрăшса çурт-йĕрне хăтлăлататççĕ, техника, хватер туяççĕ. Кунашкал ялăн малашлăхĕ пурах.

**Елена АТАМАНОВА калаçнă.**

**Тăванăм, вулаканăм!**
**Пĕтĕм халăха пĕрлештерекен уявра эпир те пĕрлех пулар. "Чăваш хĕрарăмĕпе" çитес çурçуллăхра та çыхăну тытасса шанас килет. Çырăнтару тапхăрĕ вĕçленсе пынине аса илтеретпĕр. Унăн хакĕ кăшт ўсни – 360,66 тенкĕ – пирĕн туслăха татма пултарать-и вара? Хаçат индексĕ: 11515.**
**Хаçата альтернативлă майпа та çырăнма юрать – кун пек чухне ăна редакцие килсе илмелле.**
**Капла майпа укçа-тенкĕ те самаях перекетленет.**



ÇĔР ЙЫТĂВĔ ТАВРА

# Тымар ан çĕртĕр тесен...

**Сутуçăсем калана тăрăх, кăçал, иртнĕ çулсенчипе танлаштарсан, вăрлăх 3-4 хут нумайрах сутнă. Кăна çапла çеç ăнлантарма пулать – çынсем хăйсем пахчаçимĕç ытларах туса илесшĕн. Çак пулăм пушă выртакан çĕрсем сахалланасса та шантарать.**

Тем тесен те чăваш чун-чĕринче хресчен туйăмĕ, çĕр çинче тăрмашасси вăйлă аталаннă. Пахчара е уйра вăй хуракан хăйĕн лаптăкне йĕркере тытса тăма тăрăшатех.

Россельхознадзорăн республикăри управленине килекен çырусен авторĕсем кÿршисем лаптăкĕсене тĕрлĕ йăх-яхран тасатманшăн кăмăлсăрланнине палăртаççĕ.

Шупашкар районĕнчи Лапсартан килнĕ çырура çав тăрăхри 2 общество ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсемпе урăх тĕллевпе усă курнине пĕлтереççĕ. Пĕри – пысăк тиевлĕ машинăсем лартма тата юсама усă курать, тепри вара çуртсене тата сооруженисене пушă кĕленчесем пуçтарма тытать, çавăн пекех вĕсене арендăна парать. Лару-тăрăва уçăмлатнă май Çĕр саккунĕсене пăснăшăн явап тыттарма тăхтанă: пĕр обществи усă куракан çĕр – промышленноç категорине кĕртнĕскер пулнине документсем çирĕплетеççĕ. Çырура кăтартнă тепĕр общество вара унта ĕçлемест-мĕн.

Тепĕр çырура та ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕр çинче "Галина" гаражсен кооперативĕ вырнаçнине пĕлтернĕ. Çакă саккунпа килĕшсе тăнине тĕпчеме ыйтнă автор. Тепĕр кунах управление çитсе ыйту çырать: çырăва пăхса тухмалла мар, мĕншĕн тесен ăна вăл çырман иккен. Кам çапла "шÿтлеме" пултарнине полици ĕçченĕсем тĕпчеççĕ.

Етĕрне районĕнчен те кăсăклă çыру çитрĕ. Ирçе ял тăрăхĕнче пурăнакан арçын 1 метр çÿллĕш чăрăш каснă тĕлĕшпе полици ĕçченĕсем çырнă постановленипе килĕшмест. Унăн шухăшĕпе, ял тăрăхне тăкак кÿмен вăл, пачах хирĕçле – усă тунă. Ялхуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕр çинче йывăç-тĕм ÿсмелле мар вĕт. Ку ĕç вĕçне тÿрех пăнчă лартаймăн та. Çырура кăтартнă лаптăк çырма хĕрринче вырнаçнă, унăн категорине Росреестр палăртайман: унта пай çĕрсене межевани туман иккен. Автор çырнă пек, ялхуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсем çинче тĕмсем ешерекен лаптăк тĕлне те пулман тĕрĕслевçĕсем.

Ытларах чухне вара çынсен пăшăрханăвĕ ахальтен çуралмасть. Нумаях пулмасть Канаш район администрацийĕнчен килнĕ çыру тăрăх тĕпчев ирттерчĕç инспекторсем. Чăнах та, çырура кăтартнă пекех, арендăна илнĕ ялхуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрпе тĕллевлĕн усă курмаççĕ иккен: 157,01 гектар çинче йывăç-тĕм тарăн тымар яма та ĕлкĕрнĕ. Каснă хыççăн çакă палăрнă: хурăн – 6, хыр – 5, çăка 6 çулта пулнă.

Росреестрăн Чăваш Республикинчи управленийĕнчен çитнĕ çырура вара Шупашкар районĕнчи асăннă категори тепĕр лаптăк шар курнине пĕлтереççĕ: вĕтĕ чул сарнăскер автоçула çаврăнса пырать иккен. Унта çум курăкĕсĕр пуçне нимĕн те ÿсмест-мĕн. Йĕркесĕрлĕх куç умĕнче, анчах айăплине палăртма май килмен.

Росприроднадзорăн республикăри управленийĕ 2 çын ыйтăвне тĕпчеме ыйтнă. Пĕрне – теприн тăрăх административлă тĕпчев йĕркеленĕ. Сăлтавĕ: çĕрĕн паха сийне хăйсен тĕллĕн хырса илнĕ. Йĕркене пăхăнман общество тĕлĕшпе протокол хатĕрленĕ.

Пĕлтĕр те çакăн йышши çыру килнĕччĕ. Унти информацисене тĕпе хурса административлă 15 тĕпчев ирттернĕ. Юридици сăпатĕнчи – 5, должноçри 7 çынна тата 3 гражданина административлă майпа явап тыттарма сăлтав тупăннă.

"Çĕрте – пирĕн тымарсем," – теççĕ халăхра. Çакă шухăша ярать те: лайăх мар çĕрте мĕнле тымар аталанĕ-ши? Çĕрнĕ тымартан вара мĕн пулĕ-ши?..

**Надежда ВАСИЛЬЕВА, Россельхознадзорăн Чăваш Республикинчи управленийĕн ĕçченĕ.**

ЙЫШĂНУ

# Сутма чараççĕ

**ЧР Министрсен Кабинечĕ çĕнĕ хушăва алă пуснă. Унпа килĕшÿллĕн çĕртмен 1-мĕшĕнчен пуçласа республикăра этил спирчĕн виçи 1,2-9 процентпа танлашакан, кофеинлă тата кăмăла уçакан, сахал алкогольлĕ шĕвексене, кĕскен – энергетиксене – сутма чараççĕ.**

ЧР Патшалăх Канашĕн Экономика политики, агропромышленноç комплексĕ тата экологи енĕпе ĕçлекен комитечĕн кăçалхи кăрлачра иртнĕ ларăвĕнче асăннă йышши шĕвексен тĕлĕшпе чарусем палăртма ыйтнине пăхса тухнă. Саккуна тÿрлетÿсем кĕртессине «Единая Россия» парти председателĕн Дмитрий Медведевăн регионти общество йышăну пÿлĕмĕн ертÿçи, ЧР Парламенчĕн депутачĕ Николай Николаев пуçарнă. «Çамрăк Гвардин» шухăш-тĕллевĕпе те пĕр килнĕ çакă.

Республикăра 21-28 çулсенчи çамрăксен алкоголизмпа чирлесси ÿснĕ. «Энергетиксем» вара çитĕнекен ăру пурнăçĕпе сывлăхĕшĕн хăрушă.

**Татьяна НАУМОВА.**

СПОРТ

# Марокко принцĕ пулăшнипе

**Чăваш Ен спортсменки Ольга Мондикова Марокко принц ятлă лашапа пĕрремĕш хутчен конкур енĕпе Раççей чемпионачĕн призерĕ пулса тăнă: бронза медале тивĕçнĕ.**

Ăмăрту çĕртмен 5-7-мĕшĕсенче Мускав облаçĕнчи лаша спорчĕн чи лайăх «Ивановское» комплексĕнче иртнĕ.

Ентешĕмĕр 7 çулти лашасен программине хутшăннă. 29 юлануçă ăмăртнă ку номинацире. 125 тата 130 сантиметр çÿллĕш чăрмава вăл малтанах тăххăрмĕш тата тăваттăмĕш кăтартупа вĕçленĕ. Финалта 135 сантиметр çÿллĕш чăрмава парăнтарса Марокко принцпа иккĕшĕ виççĕмĕш кăтартупа савăнтарнă. Пике хăйĕнчен Мускаври тĕнче класлă спорт мастерне Михаил Атоянпа Мускав облаçĕнчи спорт мастерне Анатолий Шишкова çеç ирттернĕ.

Ольга – спорт мастерĕн кандидачĕ. Вăл республикăри çамрăк юлануçăсемпе ĕçлет. Хăйĕн ăнăçăвне лаша спорчĕн шкулĕ валли тăрăллă манеж тунипе çыхăнтарать.

**Татьяна НИКОЛАЕВА.**

НАРКОТИК

# «Каç-2015»

**Чăваш Енри наркополицейскисем каçхи клубсенче «Каç-2015» акци ирттернĕ.**

Наркотик салатассине тупса палăртас тĕллевпе йĕркеленĕ акци Раççей шайĕнче иртнĕ. Пилĕк ушкăн çамрăксем пухăнма пултаракан вунікĕ вырăна çитнĕ. Операци вăхăтĕнче 20 çынна тытса чарнă, наркотик сутнă 5 тĕслĕхе палăртнă. Управлени ĕçченĕсем административлă майпа правăна пăснă 14 тĕслĕхе шута илнĕ.

Тытса чарнă çынсен хушшинче пĕри тахçанах федераци шыравĕнче. Вăл малтан та саккуна пăсса наркăмăш салатнă.

РФ наркотĕрĕслев службин ЧР Управленийĕн оперативлă службин пуçлăхĕ Андрей Григорьев каланă тăрăх, каçхи клубсем малтанхи пекех пысăк хурушлăх кăларса тăратаççĕ. Çавăнпах, «Каç-2015» акци вĕçленнĕ пулин те, кунашкал рейдсене малашне те тухĕç.

**Татьяна НАУМОВА.**

КИРЕВСĔРЛĔХ

# Вăт ку вĕрентекен...

**Шупашкарти Калинин район прокуратури 39 çулти арçын тĕлĕшĕпе пуçарнă уголовлă ĕçе пăхса тухнă. Тĕп хулара пурăнаканскерне Интернетра савăшу материалĕсем салатнăшăн айăпланă.**

Следстви версийĕ тăрăх, республикăри аслă шкулсенчен пĕринче студентсене вĕрентнĕ Артемьев 2011 çулхи чÿк уйăхĕнчен пуçласа 2014 çулхи пуш уйăхĕччен саккуна пăсса Интернетра порнографи материалĕсем салатнă. Ку тĕллевпе вăл ĕçĕнчи компьютерсемпе усă курнă.

Артемьева айăплакан статьяпа килĕшÿллĕн икĕ çултан пуçласа ултă çулччен ирĕклĕхсĕр хăварма май пур. Çав вăхăтрах вунпилĕк çул таран пĕр-пĕр должноç йышăнма юраманнине, е пĕр-пĕр ĕçе вырнаçма ирĕк çуккине те çирĕплетнĕ унта.

**Анна НИКОЛАЕВА.**

САМАХ ПАРĂР-ХА

# Ултав çулĕ кукăр – аттестатсăр хăварма та пултарать

Татьяна НАУМОВА

**Çу кунĕсем çитнĕ май пĕрисен ĕç хушăнать, теприсен, пачах тепĕр май, пушă вăхăт нумайланать. Иккĕмĕшĕсем – шкул ачисем паллах. Анчах вĕсем те вăхăта сая ямаççĕ. Аслисене пулăшаççĕ, хăшĕ-пĕри вăхăтлăх ĕçе те вырнаçать. Ан тив, кĕçĕнреххисем ытларах урамра чупаççĕ. Пултăр – усăсăр мар. Хĕвел çинче, усă сывлăшра çамрăк кĕлетке çирĕпленет. Ку та паха.**

**9-мĕшпе 11-мĕш классен вара хĕрÿ тапхăр пырать. Экзаменсем. Республикăри шкулсенче юлашки шăнкрав кăçал 11,2 пин хĕрпе каччăшăн янăрарĕ. Вĕсенчен 6,5 пинĕшĕ вунпĕрмĕш класран вĕренсе тухать.**

**Хумханулла, ачалăха хыçа хăваракан уяв иртсенех яшсемпе хĕрсене пĕлтерĕшлĕ те яваплă тапхăр «çупăрларĕ». Патшалăх пĕрлехи экзаменне еплерех тытнинчен çамрăксен малашнехи пурнăçĕ килет-çке. Вăтам пĕлÿ хыççăн чылайăшĕ аслине илме талпăнать. Кăмăл тунисем чи малтанах литературăпа географине еплерех пĕлнине кăтартрĕç. Çу уйăхĕн 28-мĕшĕнче вара пурте вырăс чĕлхипе экзамен çырчĕç.**

**Класа кашни ачана тĕплĕ тĕрĕслесе кĕртнине те аса илтерер. Пур пÿлĕмре те телефонсене хуплакан, металл шыракан хатĕрсем, видео-, онлайн-сăнав пур. Çавăнпах Рособрнадзор ĕçченĕсем кирек хăш регионăн хăть те хăш пунктне экзамен епле пынине кĕрсе пăхма пултараççĕ. Вĕсен ку тĕллевпе ятарлă кодсем пур.**

**Паллах, кунашкал çирĕп йĕрке чылайăшне килĕшмест. Ара, унччен экзамена уява кайнă пек утнă пулсан, халĕ – чăн-чăн çирĕп тĕрĕслев ку. Экзамена шăпах савăнса-кулса кайнă ашшĕ-амăшне паянхи лару-тăру пушшех пăшăрхантарать ахăр. Çирĕп йĕркесене йышăнассин тĕп сăлтавĕ шăпах хăйсемпе çыхăннине хăшĕпĕри ăнланмасть-тĕр. Ара, ачисен экзамен кăтартăвĕ лайăх пултăр тесе мĕн кăна шухăшласа кăлармаççĕ!**

**Анчах йĕрке – йĕркех. Ăна йышăннă пулсан – пăхăнмаллах. Вĕсене çулран çул çирĕплетме хĕрсе пыракан лару-тăру хистет. ППЭ тытма ачисенчен ытларах ашшĕамăшĕ хатĕрленет-çке.**

**Вăтам шкултан вĕренсе тухакан хăй пĕлĕвне тĕрĕслеме килнине мар, камăн ашшĕ-амăшĕ пуçарулăрах та пултаруллăраххине тĕрĕсленĕнех туйăнать. Çавăнпах-тăр кăçал условисем уйрăмах çирĕппине палăртаççĕ.**

**Йĕркесем кăна мар, кăçал экзамен заданийĕсем те чылай улшăнчĕç. Вырăс чĕлхипе тест пайне кăларса пăрахнă. Ун вырăнне вĕренекенсем 24 ыйтăва кĕскен хуравланă. Аттестат илес тесен çак экзаменра пĕтĕмĕшле 24 балран кая мар пухмалла, аслă шкула вĕренме кĕрес ĕмĕтлисен – 36.**

**Математикăпа экзамен кăçал икĕ шайра иртрĕ. Аттестат илессишĕн – база шайĕнче – тĕрĕслеве хутшăннисем ăна çĕртмен пĕрремĕш кунĕнчех çырчĕç. Пурĕ 3556 çын. Профиль шайĕнче кирлисем тĕрĕслев витĕр çĕртмен 4-мĕшĕнче тухрĕç. Йĕркене пăсакан та тупăннă – пĕр çамрăка телефонпа кĕнĕшĕн экзаменран кăларса янă.**

**Чăваш республикин Вĕренÿпе çамрăксен политикин министерстви пĕлтернĕ тăрăх, йĕркене пăснă тĕслĕхсем татах та пур. Пĕрремĕш экзаменрах хĕрпе каччă чееленме шухăш тытнă. Иккĕшĕ те – Канашран. Каччă тĕрĕслеве хатĕрленнĕ май шăккалат ăшне географи картисене хуçлатса чикнĕ, пике вара чăлха ăшне кĕсье телефонне вырнаçтарнă. Экзамен вăхăтĕнче вăл янăраса кайнă...**

**Экзаменсем малаллах пыраççĕ-ха. Тунтикун химипе тата обществознаниепе ППЭ тытнă. Кунта 5 çын йĕркене пăсни палăрнă. Виççĕшĕ кĕсье телефонне усă курма хăтланнă. Вĕсенчен пĕри шкултан кăçал мар, маларахах тухнăскер. Иккĕшĕ тĕрлĕ справочникпе усă курма тĕв тунă.**

**Паян та ачасем экзамента лараççĕ. Хăшĕ-пĕри хăйĕн пĕлĕвне физика енĕпе тĕрĕслет. Иккĕмĕшĕсем ют чĕлхепе экзаменăн çыру пайне çыраççĕ.**

**Йĕркене пăсакансем ППЭне тепĕр хутчен çитес çулсăр та текех çыраймĕç. Кашнин ĕçнех пăрахăçлаççĕ. Малалли шухăш-тĕллеве пурнăçлама та чарать çакă. Çавăнпах экзаменсенче хамăра хамăр ура хурас марччĕ.**



КУН-ÇУЛ

# Тĕп тĕллев – вĕрентесси

Паллах, Мария Ивановнăсем вĕрентекенсен хушшинче чăн пурнăçра та сахал мар. Вĕсем республикăра та пур. Вĕсенчен пĕри Патăрьел районĕнчи Пăлакассинче пурăнать.

– Ачасене çав тери юрататăп. Мăнуксем килсен те ниçта кайса кĕрейместĕп. Çавăнпах вĕрентекен ĕçне суйланă та, – тет 40 çул кĕçĕн классене вуламаçырма, сас паллисене паллама хăнăхтарнă Мария Артемьева.

1931 çулта Патăрьелĕнче кун çути курнă вăл. Ачалăхĕ çăмăл килменни каламасăрах паллă.

– Выçăллă-тутăллă пурăнасси çав тери йывăр. Маншăн çеç мар, пуриншĕн те тертлĕ-асаплă килнĕ вăл кунсем. Атте вăрçа тухса кайнă чухне чи кĕçĕн шăллăм сăпкари ачаччĕ. Пурăнаймарĕ вăл. Çимелли те çукчĕ, килте те сивĕччĕ. Хутма вутă та çукчĕ. Туянма укçи пулман. Карапай-Шăмăршăран турат турттараттăмăр. Манран пĕр çул кĕçĕн шăллăмпа Васçапа тата аннепе виççĕн сĕтĕреттĕмĕр ăна, – аса илет Мария Ивановна. – Аттепе анне кунĕпех ĕçре пулнă. Кил-çурта Васçапа иксĕмĕр тирпейлеттĕмĕр. Çар училищине вĕренме кĕчĕ шăллăм, подполковнике çитрĕ. Халĕ вăл та çук. Крымра пурăнаканскере пытарма та каяймарăмăр, – ассăн сывлать ĕç ветеранĕ.

Пурнăçра савăнăçĕ те, пăшăрханăвĕ те сахал мар. Мăшăрĕ Алексей Федорович ĕмĕрлĕхех куçне хупнăранпа та 18 çул иртнĕ.

– Туйра паллашнăччĕ пулас мăшăрпа. Юлташĕ авланатчĕ. Хĕрĕ пире тăван лекетчĕ. Хыççăн çӳрерĕ те кăмăл çаврăнчĕ, – аса илет çамрăклăхне хĕрарăм.

Ывăлĕ те 11 çул каялла пурнăçран уйрăлнă.

– Федя аварие çакланнă, кин икĕ мăнукпа тепĕр хутчен качча кайрĕ. Çапла саккăрмĕш çул пĕччен пурăнатăп. Кин çав тери лайăх. Шел, пĕрле пурăнаймарăмăр. Кӳренместĕп ăна. Çамрăк-çке – ĕмĕре пĕччен ирттерме çук.

**Шкул пурнăçĕ-пăтăрмахĕпе çыхăннă кулăш сахал мар. Вовочка çинчен хайлanisем те куллен çĕнелсе пыраççĕ. Унпа пĕрлех МарьИванна вĕрентекен сăнарĕ те аталансах пырать.**



Хăнана та килсе çӳрет. Чирлесен больницăна та пырать, – тет ултă ача амăшĕ.

Хĕрĕсем пурте çывăхра тĕпленнĕ. Пĕри çеç Мускаврa пурăнать.

– Ачасемпе, мăнуксемпе киленетĕп. Вунпĕр мăнукăн вуникĕ ачи çитĕнет. Куç тулли савăнатăп вĕсемпе. Аслă хĕрĕм миçемĕш çул ĕнтĕ пепкесене сут тĕнчене килме пулăшать. Пĕри сутуçăра тăрăшать. Виçĕ хĕр хам пекех вĕрентекен ĕçне суйланă. Иринăпа Оля, Марина мăнукăмсем те çак ĕçех кăмăлларĕç. Кĕрӳ те – учитель, – унăн ĕçне хисеплесе йăхра малалла тăсакансем пурришĕн хĕпĕртесе те кăштах мăнаçланса калаçрĕ тараватлă чăваш хĕрарăмĕ. – Йăхра вĕрентекен пулман. Пурте сĕр çинче тăрăшнă. Анне вулама та пĕлместчĕ. Атте кăштах чухлатчĕ-ха. Эпĕ вĕренес шухăшлине тăванăмсем, паллах, хапăлласа йышăнчĕç. Питĕ савăнчĕç, – пытармасть ăш пиллĕскер.

84 çула кайнăскер вăрçине те, выççине те, нушине те курнă пулин те хуçăлман. Паян та çав тери илемлĕ хĕрарăм Мария Ивановна. Уçă та ăшă кăмăллă, тарават. Ăсталăхĕпе те палăрать тивĕçлĕ канури вĕрентекен. Çĕлеме, çыхма ăста вăл.

– Çĕр вăрăм, ыйхă килмест. Ларатăп çапла çыхса. Пĕлтĕр хĕрсемпе мăнуксене пушăн саккăрмĕшĕ ячĕпе тутăрсем çыхса парнелерĕм. Кăçал капăр жилет янтăларăм. Пурин валли те ĕлкĕртме тăрăшатăп, – тет 11-12 çултах чĕнтĕр çыхма вĕреннĕскер.

Мăнуксене те илемлĕ чăлха-нускипе, алсишпе савăнтарать кукамай-асанне. Пĕрре те ахаль лармасть вăл. Пурнăç çыхма çеç мар, çĕлеме те вĕрентнĕ ăна.

– Ачасене те пальто таранах хамах çĕлесе тăхăнтартаттăм. Пĕр-пĕр тума юсамалла чухне пулăшу ыйтма килекен халĕ те пур. Куç курманнипе асапланмастăп, куçлăх тăхăнмастăп, – тет маттурскер.

Илемне, сывлăхне упрама, тен, çутçанталăк та пулăшать-тĕр. Хĕлĕпе тĕрлĕ курăк чейĕпе сăйланать ватă. Çак тĕллевпех çăвĕпех улăх-пахчара çӳрет. Хĕрлĕ клевер, матрӳшке, шапа хупаххи, чапăр курăкĕ, кукша пуç, салтак тӳми, çăка çеçки тата тем-тем тĕрлине пухать. Пахчара та ӳстерет.

– Эрĕм те пуçтаратăп, вăл та усăллă. Ватăлнă май юн çăралать вĕт, ăна шĕветмелле. Хĕлĕпе черетлесе ĕçетĕп курăксене. Пĕрре те ахаль лармастăп. Пахчаçимĕç те çитĕнтеретĕп, çăва тухсан чăх-чĕп туянатăп. Ĕç пурри лайăх вăл, çынна ĕç çукки пĕтерет, – ырă сĕнӳ вырăнĕнчех ватă сăмахĕсем.

– Кӳршĕ-аршă та ăста манăн. Маттур хĕрарăмсем пурăнаççĕ ялта. Пĕрпĕринпе ăмăртмалла ĕçлетпĕр, алă ĕçĕ тăватпăр. Çав тери туслă пурăнатпăр. Сăмах та килĕшет пирĕн, – ырă та çутă туйăмпа калаçать Мария Ивановна.

Хăв лайăх пулсан тавралăху та ырă теççĕ. Хăй уçă та таса кăмăллине курах пурнăçра ытларах шурă тĕс шырама тăрăшать вĕрентекен.

Кулăшсенчи хăйпе пĕр ятлă сăнар пирки те сăмах хускатрăмăр Мария Ивановнăпа. Анчах ятпа çыхăннă кулăшла самантсем пулман вĕрентекен пурнăçĕнче.

– Шӳтлесси-куласси хăть те хăш саманара-вăхăтра та пур. Вĕрентекенсем пирки те халап-юмах яраççĕ пулинех. Учителĕн тĕп тĕллевĕ – ачасене вĕрентесси, воспитани парасси. Ят пĕлтерĕшлĕ мар, – пĕтĕмлетрĕ Мария Ивановна.

**Татьяна НАУМОВА.**
Автор сăнӳкерчĕкĕ.

КИЛ ĂШШИ

# «Анне, сана кĕтрĕм...»

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

## Аслипе...

Çемьере йыш хушăнманни мăшăра çав тери пăшăрхантарни каламасăрах паллă. «Варта пепке тĕвĕленессе 10 çул кĕтрĕмĕр. Ача-пăчасăр ирттерес килмерĕ пурнăçа. Çавăнпах Анжелăна хамăр çунат айне илтĕмĕр. Вăл пĕчĕкренпех, уйăх çурăрanпах, çак килте», – ăнлантарать Светлана Анатольевна. Ача усрава илнине вăрттăнлăхра тытаймăн. Ялта пушшех çакăн çинчен пурте пĕлеççĕ.

«Шкула яриччен Анжелăна чуна уçса калаçма тĕв турăмăр. Эпир уншăн тăван маррине пĕлтертĕмĕр. «Атте-анне, шӳтлетĕр эсир, ун пек пулма пултараймасть», – ĕненесшĕн пулмарĕ хĕрача. Кайран каллех çак калаçу патне таврăнтăмăр», – теççĕ Ивановсем. Хăйне чунран юратнине ача никамран лайăх туять. Çакăнтан пĕлтерĕшлĕрех, хаклăрах, сумлăрах туйăм пур-и çĕр çинче?

Пĕрре çапла Ивановсем темпе юрайман ял-йыша. Вĕсен телейне ăмсанакан хур тума шухăш тытнă пулинех. Чунне шĕкĕ кăшлакан çын Анжелăн çулĕ çине тухса тăнă. Ăна усрава илнине çав тери каласа кăтарас килнĕ унăн. Хĕрачана тăван мар ашшĕпе амăшĕнчен сивĕтме хăтланнă-ши вăл? Çакă, паллах, никама та чыс кӳмест. «Эпĕ йăлтах пĕлетĕп», – палăртнă Анжела.

«Аслисенчен тĕрлĕ хыпар илтнĕ ачасем темĕн те пĕр персе яма пултараççĕ. Анчах мăн çын çапла хăтланасса шухăшламан», – чунне уçать хĕрарăм. Темле пулсан та хăй телейлĕ çăлтăр айĕнче çуралнине ăнланать хĕрача. Шкулта лайăх вĕренсе ашшĕ-амăшне савăнтарать вăл. Ĕне кĕтĕвĕ пăхма, пахчара çум çумлама, килте тирпейлеме пулăшать.

## ...кĕçĕнни

«Эпĕ – пĕччен. Мана йăмăк кирлĕ...» – тархаслама пуçларĕ Анжела. Ăна кичем ан пултăр тесех тепĕр ача шырама пуçларăмăр», – пытармасть Светлана Анатольевна. Ывăл илме те хирĕç пулман вăл. Кил хуçи вара хĕрача пăхма сĕннĕ. «Хăвна пулăшакан пулĕ», – тенĕ арçын.

Ивановсен килĕнче 5 ывăл çитĕннĕ. «Пирĕн йышра хĕрача пулман та...» – ăнлантарать Юрий Игнатьевич. Çемьере хĕр-упраç алли, сасси, кăмăлĕ çитменни сисĕннĕ-ши? Анжелăпа Вероника çывăх туслашасса шанаççĕ ашшĕпе амăшĕ.

Лайăха çын хăвăртах хăнăхать. Çĕнĕ çĕрте Вероника хăйне хăтлă туйнине кирек кам та тӳрех асăрхĕ. Картишĕнче чăх чĕпписем чупса çӳрени те, пахчари ӳсен-тăран тепĕр çулçă хушни те интереслĕ уншăн. Ахальтен мар çавра çил евĕр таçта та ĕлкĕрет пĕчĕкскер. «Хĕрсенчен пĕри – пулемет, тепри – автомат», – лара-тăра пĕлменскерсене киленсе сăнаççĕ çывăх çыннисем.

Виçĕ уйăхра Вероника садик пурнăçне те хăнăхма ĕлкĕрнĕ. Çапах малтан тантăшĕсемпе пĕрле юласшăнах пулман вăл. «Анне, эсĕ мана çакăнта пăрахса хăваратăн-и?» – ахăртнех, ача çуртне лесçе хăварнăн туйăннă ăна. Кил ăшшине хăнăхма пуçланăскерĕн тинтерех тупăннă ашшĕпе амăшĕнчен уйрăлас килмен. Каçхине ача садне илме пырсан мĕнешкел савăннă хĕрача.

«Малтанах хăйĕн теттисене пĕр сумкăна пуçтарса йăтса çӳретчĕ. «Япалусене никам та тытмĕ, илсе каймĕ», – тесен çеç лăпланчĕ. Сĕтел хушшине ларсан та васкаса çиетчĕ. «Манăн пуканепе выляс килет. Çав вăхăтра турилккене никам та тĕкĕнмĕ-и?» – кусран пăхатчĕ Вероника», – аса илет Светлана Анатольевна.

Анжелăна та, Вероникăна та нумай тетте илсе панă. Кĕçĕнни, тĕслĕхрен, воспитателе çаврăнма юратать. Кăнтăрлахи апат хыççăн пуканисене кравать çине вырттарать. «Хăшĕ çывăрмасть – тӳрех мана кала. Ăна ятлас пулать», – йĕрке тăвасшăн пĕчĕкскер», – каласа кăтартать амăшĕ. Çапах вăйă вăхăтĕнче вăрçăнасси манаçа тухса пырать-мĕн.

## Пултарулăхпа тыткăнланă

Ивановсем çемйипех хутран, хăюран тĕрлĕ япала ăсталаççĕ. Акăшсем, чечексем ытла та çыпăçуллă, хитре. Килтĕш ял библиотекинче тăрăшакан Светлана Анатольевна çак ĕçе ыттисене те явăçтарать. Сăмах май, çак уйăх пуçламăшĕнче Етĕрне культура çуртĕнче «Çемье вучахĕ» пултарулăх конкурсĕ йĕркеленĕ. Унта ачасене усрава е опекăна илнĕ 17 çемье хутшăннă. Ивановсен ăсталăхне те пысăк хак панă жюри членĕсем. Ашшĕпе амăшне, ачасене Хисеп хучĕпе, пылак çимĕçпе хавхалантарнă. Конкурс йĕркелӳçисем пурне те çемьере килĕшӳпе тăнăçлăх суннă.

Юрий Игнатьевичпа Светлана Анатольевнăн ăшă кăмăлĕнчен, ĕçченлĕхĕнчен, çаврăнăçулăхĕнчен тĕлĕнсе килтĕм. Тĕрĕс çул çуласа илнĕ вĕсем. Ивановсен пурнăçра мĕн кирли йăлтах пур.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**



ÇЫРУ ЙĔРĔПЕ

# Театрта суя артистсем вылямаççĕ

**Эпир пурте спектакль та, концерт та курма юрататпăр. Сцена ăстисен пултарулăхне кашниех тĕрлĕрен хаклать паллах.**

**Канаш районĕнче пурăнакан ĕç ветеранĕнчен Т.Ивановăран çыру илтĕмĕр. Автор хăйĕн чун ыратăвне çак йĕркесенче палăртнă:**

*"Халĕ пурте "çăлтăр" пуласшăн тапаçланаççĕ. Çурма çарамас тумланса авкаланма ĕçленинчен çăмăлрах-çке. Мĕншĕн театра халăх сахал çӳрет? Мĕншĕн тесен унта чăн-чăннисем мар, "суя" артистсем хуçаланаççĕ. Вĕсенчен çуррине ытла кăларса ывăтмалла. Çав артистсем ниçта та вĕренмен, дипломĕсем çук. Е вĕсем дипломĕсене укçа парса илнĕ. Эпир çамрăк чухне чăн-чăн артистсем спектакль кăтартатчĕç. Уйăхра 7-8 кун Канаша килетчĕç. Эпир пĕрне те сиктермен. Халĕ вара спектакль пачах кăтартмаççĕ тесен те юрать. Лăпăр-лапăр шоусем анчах килеççĕ. Шоусене "суя" артистсемех кăтартаççĕ. Эпĕ пенсире пулсан та спектакль курма питĕ юрататăп. Çав авкаланчăксем телевизорпа та йăлăхтараççĕ. Темиçен килсе халăха улталаса каяççĕ те – ĕçĕ пĕтрĕ. Çав суя артистсене штрафламалла, укçине садиксене памалла. Чăваш садикĕсем ытларах уçмалла. Садик воспитателĕ вара чăн-чăн чăваш пултăр. Чăвашла пĕлменни мар.*

*Мĕне кирлĕ вăл хит-парад текенни? Унта пĕр путлĕ юрă та çук. "Кăвак куççем" тесе пĕр 3-4 хут калать те ытти вара пĕтĕмпех тăнкăр-тăнкăр. Тепĕр чух "юратап сана" тесе 3-4 хут каласа йăлăхтарать. Ток-хит-парад чăваш сăмахĕ те мар. Чăвашла ят тупма çук-им вара? Эпир, пенсионерсем, "Чăваш хĕрарăмĕ" урлă çав хит-парад вырăнне спектакль кăтартма ыйтасшăн. Хурав кĕтетпĕр. Чăн-чăн чăваш хĕрĕсем çурма çарамас тăхăнса авкаланса ан çӳрĕр. Крыловăн юптарăвĕнчи пек – сасă çук тăк "çăлтăр" пулаймăр. Ялтан хулана тухса кайсанах вара чăвашла та, вырăсла та мар пакăлтатма пуçлатăр. Çакă тăван халăха сутни пулмасть-и вара?*

*Хăйсемех çыраççĕ, хăйсемех юрлаççĕ, çав вăхăтрах хăйсем нотăсене те пĕлмеççĕ. Кашни çыннăн хăйĕн вырăнĕ пулмалла".*



Лару-тăрăва уçăмлатма культура тытăмĕнче ĕçлекенсемпе çыхăнтăмăр. Халĕ вĕсене сăмах паратпăр.

**"К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕ** кăçалхи çу уйăхĕн 22-мĕшĕнче 97-мĕш сезона хупрĕ. Пирĕн ушкăн патшалăхăн тата профессионалсен театрĕ шутланнине палăртса хăварас килет. 1947 çултах çакăнта ГИТИСри наци уйрăмĕнчен пĕрремĕш ăстрăмра вĕренсе тухнисем ĕçлеме пуçланă. Кайран 1961 çулта – ГИТИСран, 1972 çулта – Ленинградри театр, музыка, кинематографи институтĕнчен, 1983, 1993, 2002 çулсенче – М.С.Щепкин ячĕллĕ театрăн аслă училищинчен, 2011 çулта Чăваш патшалăх культурăпа искусствăсен институтĕнчен вĕренсе тухнисемпе йыш пысăкланчĕ.

Театр СССР халăх артисчĕсемпе Борис Алексеевпа, Алексей Ургалкинпа, Вера Кузьминапа, Валерий Яковлевпа, РСФСР тата ЧР халăх артисчĕсемпе Виктор Родионовпа, Нина Григорьевăпа, Нина Яковлевăпа, Николай Григорьевпа, Раççей тава тивĕçлĕ тата Чăваш халăх артисчĕсемпе Ольга Ырземпа, Ефим Никитинпа, Николай Степановпа, Геннадий Терентьевпа, Валентина Трифоновăпа, Иван Ивановпа, Геннадий Большаковпа, Любовь Федоровăпа, Владимир Семеновпа, Чăваш халăх артисчĕсемпе Игнат Молодовпа, Елена Шорниковăпа, Петр Ивановпа, Дарья Столяровăпа, Галина Мадеевăпа, Светлана Михайловăпа, Нинелия Смородиновăпа, Анна Кутузовăпа, Валериан Лебедевпа, Вячеслав Кудряшовпа, Николай Корчаковпа, Николай Охотниковпа, Валентина Ситовăпа, Валентина Ивановăпа, Иван Ивановпа, Геннадий Медведевпа тивĕçлипех мăнаçланать.

Чăваш патшалăх академи драма театрĕ çулленех тĕнче шайĕнчи фестивальсене хутшăнать. Спектакльсене вара чи лайăххисен шутне кĕртеççĕ.

Театр коллективĕ Мускавра /сакăр хут/, Ленинградра – Санкт-Петербургра, Хусанта, Ĕпхӳре, Самарта, Чĕмпĕрте, Йошкар-Олара, Чулхулара, Тольяттире спектакльсем кăтартнă.

Театр ял халăхĕпе те тачă çыхăну тытать. Çулсеренех çуллахи тата кĕркуннехи гастрольсене çӳрет, чи лайăх спектакльсемпе куракансен кăмăлне тупать.

Чăваш театрĕ ырă ят çĕнсе илнĕ. Сцена ăстисен пултарулăхĕ чуна тасатма, ыррине шанма пулăшать.

Пултарулăх ертӳçи, СССР халăх артисчĕ Валерий Яковлев Раççей Наци театрĕн "Ылтăн маска – 2015" премине тивĕçни театршăн çав тери пĕлтерĕшлĕ.

Чăваш патшалăх академи театрĕ Канаш хулинче тата районĕнче 2013 çулта – 7 хут, 2014 çулта – 14 хут, 2015 çулта 6 хут спектакльсем кăтартнине хушса калас килет.

Театр сайтĕнче туллирех информаципе паллашма пулать", – хуравлать театрăн пултарулăх ертӳçи Валерий Яковлев.

"Манăн шухăшпа, ку ыйтăва Правительствăна памалла. Пирĕн наци политики те, наци культурине аталантарас тĕлĕшпе чăвашла вĕрентӳ программисем те çук. Çамрăксен театрне илсен, кунта пур артист та дипломлă. Анчах та çултан çул чăвашла çыракан та, чăваш уйрăмне вĕренме кĕрекен те сахалланса пырать. Каплах ĕç кайсан тепĕр 20 çултан пирĕн чăвашла калаçакан та, вĕренекен те юлмасть, чăваш театрĕ те хупăнать", – палăртать **Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Чăваш патшалăх çамрăксен театрĕн** тĕп режиссерĕ, ЧР искусствăсен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Иосиф Дмитриев.

"Чăваш Енри патшалăх театрĕсене çулталăкра вăтамран та 530 пин ытла çын çӳрет. Профессиллĕ коллективсем вырăнта кăна спектакльсем кăтартнипе çырлахмаççĕ. Çĕнĕ сезон уçăлнă чух учрежденисем гастрольсен ятарлă планне çирĕплетеççĕ. Çулталăк тăршшĕпе ĕç графикĕпе килĕшӳллĕн республикăн кашни районне çитме тăрăшаççĕ, ытти региона та тухса çӳреççĕ. Сăмахран, 2014 çулта артистсем хамăр тăрăхра 441 спектакль лартнă, çав шутра 33-не Канаш хулипе районĕнче. Пĕтĕмĕшле илсен, асăннă тăрăхра пурăнакансене К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕ, Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Чăваш патшалăх çамрăксен театрĕ тата Патшалăх вырăс драма театрĕ савăнăç кӳнĕ иртнĕ çул.

Театр ăстисем кăçал та Канаш тăрăхне тĕрлĕ спектакльпе çитме палăртнă. Çамрăксен театрĕ çу уйăхĕнче унта пулма ĕлкĕрнĕ те ĕнтĕ. Унсăр пуçне кăрлач тата çу уйăхĕсенче Чăваш академи драма театрĕн артисчĕсем те хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарнă вырăнти халăха. Кĕркунне наци театрĕн ушкăнĕ татах çул тытĕ вĕсем патне.

Çĕртме тата çурла уйăхĕсенче вара Вырăс драма театрĕн спектаклĕсене курма май пулĕ асăннă хулапа район çыннисен.

Çавăн пекех Канашсем çĕнĕ сезон уçăлсан Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕн, Çамрăксен театрĕн, Пукане театрĕн, Эксперимент театрĕн артисчĕсемпе курнăçма пултарĕç.

2015 çулта Чăваш Республикинчи патшалăх театрĕсем Канаш тăрăхĕнче 30 яхăн спектакль кăтартма палăртнă.

Çырура театрсенче "чăн-чăн артистсем мар, "суя" артистсем хуçаланаççĕ" тенине хирĕçлесе паян Чăваш Енри патшалăх театрĕсенче тăрăшакан 314 артистран 255-шĕ /81,2 процент/ ятарлă пĕлӳ илнине палăртмалла. Тепĕр 18,8 процентĕ – ятарлă вăтам пĕлӳллĕ. Кашни артист хăйĕн пултарулăхне май килнĕ таран туптама тăрăшать: тĕрлĕ фестиваль-конкурса хутшăнать, ăсталăх класĕсемпе тĕлпулусем йĕркелет тата ытти те.

Чăваш Ен культура министерствин патшалăх культура учрежденийĕсен ĕç-хĕлне кăна сăнаса тăма ирĕк пур. Харпăр хăй тĕллĕн юрлакан, ташлакан ăстасене хушу пама нимĕнле полномочи те çук унăн. Çавăнпа та хит-парад е шоу программăсем йĕркелес ĕç-пуç вырăнти пуçлăхсемпе уйрăм артистсем калаçса татăлнинчен килет", – пĕтĕмлетет **Чăваш Республикин культура, национальноçсен ĕçĕсен тата архив ĕçĕн министрĕн** тивĕçне пурнăçлакан Альбина Алексеева.

**Марина ГРИГОРЬЕВА**
хатĕрленĕ.

ЭПИР ÇЫРНĂЧЧĔ

# "Шанхай" историйĕ. Малалли пулать

**"Чăваш хĕрарăмĕ" "Шанхайра" пурăнакансемпе кăсăклансах, юлашки вăхăтри çĕнĕлĕхсемпе паллаштарсах тăрать.**

ЧР юстици министрĕ Надежда Прокопьева Шупашкарти Мясокомбинат тăкăрлăкĕнче пурăнакансене çĕртме уйăхĕн 1-5-мĕшĕсенче йышăнасси çинчен хаçатра пĕлтернĕччĕ. Çак вăхăтра Правительство çуртне 30 ытла çын пулăшу ыраса пынă.

Людмила Ильинична, тĕслĕхрен, çакăнта 1985 çултанпа пурăнать. 60 тăваткал метрлă çуртра 5 çын валли вырăн çителĕклех. "Лидер" специалисчĕсемпе калаçнă вăхăтра çухалса кайнишĕн, çавăнпах пĕр шухăшламасăр килĕшĕве алă пуснишĕн пăшăрханать хĕрарăм. Апла тăк, халĕ унăн çемйине 33 тăваткал метр кăна тивĕçет. Паллах, хĕсĕк хваттере куçасшăн мар вĕсем. Лару-тăрăва "Лидер" организаципе сӳтсе явма, ыйтăва унпа пĕрле татма сĕнчĕ Надежда Викторовна. Ĕç тухмасан хула администрацийĕпе е ĕç ушкăнĕпе çыхăнма пулать çак çемьен.

Ача çуртĕнче çитĕннĕ Сергей Сергеевич 1989 çулта "Шанхайра" вырăн тупнă. Анчах 2003 çулта унăн пӳрчĕ çунса кĕлленнĕ. Çурт кĕнекине те илсе тухаймаn вăл. Арçын урăх çĕре прописккăна тăман. Çак таранччен тăванĕ патĕнче пурăннă. "Лидер" организаципе укçан компенсаци илме калаçса татăлнă Сергей Сергеевич. Унран та ытла, килĕшӳ тунă. Çуртсăр юлнă арçын алă пусма та ĕлкĕрнĕ. "Куçлăхсăрччĕ эпĕ, çавăнпах килĕшӳре çырнине вулаймарăм. Миçе тенкĕ куçарассине те пĕлместĕп", – тет вăл. Ăна пурăнмалли хăтлă вырăн илмелĕх укçа парасси иккĕленӳллĕ. Хăй калашле, ăçта тĕпленĕ? Ĕмĕр тăршшĕпех çын куçĕнчен пăхаймăн. Çывăх çынсен ăшшисĕр ӳснĕскер тăлăх ачасене тивĕçтерекен хваттер черетне те тăнă. Анчах юлашки çулсенче лару-тăрупа кăсăкланман. Надежда Викторовна ăна çак кунсенчех хула администрацийĕпе çыхăнма тата "Шанхай" тĕлĕшпе тепĕр хут ыйту çырнă чухне тăлăх çитĕннине палăртма сĕнчĕ.

Зинаида Ивановна 5 сотка çĕр çинче икĕ çурт хăпартнă. Унта хăйне те, ачисене те хăтлă. Çĕнĕ çуртра 100 тăваткал метр лаптăк ыйтать тивĕçлĕ кануri хĕрарăм. "Эпĕ пĕтĕм укçана строительствăна хывнă. "Лидер" организацие хушса тӳлемешкĕн нухрат пуçтарайман", – тет хĕрарăм. Малтан никама та 33 тăваткал метртан пысăкрах хваттер парасшăн марччĕ нумай хутлă çурт çĕклекенсем. Микрорайонти пĕр çынна та хăй килĕшмесĕр урăх çĕре куçармасси пирки аса илтерчĕ министр. Енчен те Зинаида Ивановнăн çурчĕсем строительсене чăрмантармаççĕ тĕк çак лаптăка тĕкĕнмесĕр те хăварма пултарĕç.

Мясокомбинат тăкăрлăкĕн 7-мĕш лини урамĕнче кăна çӳллĕ çуртсем хăпартаççĕ. Урăх лини урамĕнче тĕпленнисем те канăç çухатнă иккен. Ахальтен мар вĕсем те министр патне пынă.

"Пĕчĕк лаптăкра пурăнакансем çӳллĕ çуртри хваттере куçма май пурришĕн савăнаççĕ çеç. Хăшĕ-пĕри хăйĕн пӳртне строительство планне кĕртме, çавна май пурăнмалли уйрăм кĕтес уйăрса пама ыйтать. Тĕслĕхрен, пĕр сусăр килчĕ. Ăна хĕлле кăмака хутма йывăр", – каласа кăтарать Надежда Викторовна.

Çапах çакăнти çынсем пĕрре кăна мар, икĕ е виçĕ пӳлĕмлĕ хваттерсене вырнаçма ĕмĕтленеççĕ. Вĕсен шанăçĕ тӳрре тухтăрччĕ.

Лару-тăрăва малашне те куçран вĕçертмĕпĕр.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**



## АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР

### Какайпа, çăмартапа



**Пĕçернĕ 400 грамм чăх какайĕ, 3 çăмарта, 2 хăяр, 1 панулми, 150 грамм сыр, майонез, тăвар, укроп кирлĕ.**

Чăх какайне пĕрчĕлесе турамалла. Çăмартана, хăяра, панулмие, сыра теркăламалла. Çимĕçсене майонезпа пăтратмалла. Салата вĕтетнĕ укроппа илемлетмелле.

### Çĕрулмипе, кăлпассипе

**3 çĕрулми, 200 грамм помидор, 150 грамм кăлпасси, 150 грамм сыр, тип çу кирлĕ.**

**Соус валли 2-шер апат кашăкĕ майонезпа хăйма , 2 шăл ыхра хатĕрлемелле.**

Çĕрулмие пĕрчĕлесе турамалла, ылтăн тĕс çапиччен тип çупа ăшаламалла. Помидора – çурма çаврашкан, кăлпассие пĕрчĕлесе турамалла. Сыра теркăламалла.

Хăймапа майонеза пăтратмалла, вĕтетнĕ ыхра хушмалла.

Салата сийлесе /помидор – кăлпасси – сыр – çĕрулми/ хăпартмалла. Кашни сийе соус сĕрмелле. Сĕтел çине лартиччен ăна сивĕтмĕшре тытмалла.

### Смузи

**1/2 стакан курага, 1/2 стакан исĕм, 3 апат кашăкĕ сĕлĕ хăрпăкĕ, 2 стакан сĕт, 1 ывăç миндаль, пыл кирлĕ.**

Тип çатмара ăшаланă майăра вĕтетмелле. Ăна сĕтпе пăтратса вĕретмелле.

Курагапа исĕме вĕри шывра шўтермелле. Типĕтнĕ улмаçырлана сĕлĕ хăрпăкĕпе пĕрле блендерпа вĕтетмелле. Çак хутăша сĕтпе пăтратмалла, пыл хушмалла.

### Торт

**600 грамм печени, 150 грамм арахис, 1 ывăç сахăрланă çимĕç, 100 грамм шăккалат, 100 грамм мармелад кирлĕ.**

**Крем валли 1 пачка услам çу, 1 банка çăратнă сĕт хатĕрлемелле.**

Ăшаласа хуппинчен тасатнă арахиса вĕтетмелле. Печение çĕçĕпе касмалла.

Печение мăйăрпа, сахăрланă çимĕçпе пăтратмалла.

Çăратнă сĕте çемçе услам çупа хутăштармалла.

Печенипе крем хутăшне савăта тўпелесе тултармалла. Торта мармеладпа илемлетмелле. Çиелтен ирĕлтернĕ шăккалатпа витмелле. Ăна темиçе сехетлĕхе сивĕтмĕше лартмалла.

### Хăпарту

**4 çăмарта, 1 стакан шĕвĕ хăйма, 200 грамм сыр, 1 пачка спагетти, 500 грамм чăх какайĕ, маринадланă 4 хăяр, 4 помидор, тăвар, пăрăç, тип çу кирлĕ.**

Спагеттипе чăх какайне уйăрммăн пĕçермелле. Çăмартана шĕвĕ хăймапа пăтратса кăпăклантармалла, теркăланă сыр, тăвар, пăрăç хушмалла.

Спагеттие çăмартапа хăйма хутăшĕпе пăтратса çатмана хумалла.

Чăх какайĕне маринадланă хăяра пĕрчĕлесе турамалла. Çак çимĕçсемпе спагеттие витмелле. Унтан çаврашкан туранă помидор хумалла. Майонез сĕрмелле, теркăланă сыр сапмалла. Хăпартăва 1 сехетлĕхе духовкăна лартмалла.

### Паштет

**500 грамм сысна сали, 5 шăл ыхра, чили пăрăç, 150 грамм аçтăрхан мăйăрĕ, 40 грамм мăкăнь, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Пăрăçа вăррипчен тасатмалла. Аçтăрхан мăйăрне ăшаламалла. Сысна салине пăрăçпа, ыхрапа, мăйăрпа пĕрле аш арманĕ витĕр кăлармалла, мăкăнь, тăварпа пăрăç хушмалла. Паштета хура çăкăр çине сĕрмелле.

### Сĕт яшки

**2 литр сĕт, 250 грамм шĕвĕ хăйма, 4 çăмарта сарри, 1/2 стакан сахăр, чĕптĕм тăвар, ванилин кирлĕ.**

**Чуста çăрма 4 çăмарта шурри, 4 апат кашăкĕ сахăр, 100 грамм çĕр çырли, 1 апат кашăкĕ çăнăх хатĕрлемелле.**

Çăмарта саррине сахăрпа пăтратса кăпăклантармалла,1 стакан сĕт хушмалла.

Сĕтпе шĕвĕ хăймана вĕретмелле, пăтратма чарăнмасăр çăмарта хутăшĕ ямалла.

Çĕр çырлине сахăрпа, çăнăхпа хутăштармалла. Çăмарта шуррине пăтратса кăпăклантармалла, çырла нимĕрĕ хушмалла. Çак хутăша чей кашăкĕпе ăсса вĕрекен сĕте ямалла.

## ШУТА ИЛМЕ

# Килти кăмпана епле пĕтермелле?

**Килте кăмпа ўсме тытăннине асăрхама йывăр мар. Малтанах стена пĕрени е урай хăми çинче шурă мамăк е çип тĕркемĕ евĕр ярала ўссе ларать. Каярах сарă, çутă хĕрлĕ, кĕрен паллăсем тухма тытăнаççĕ. Вĕсем майĕпен кĕмĕл евĕр сăрă тĕспе витĕнеççĕ. Тепĕр чухне 10 миллиметр хулăнăш çипсем те ўсеççĕ. Кун пек кăмпа çурт тăрăх саралать. Кăмпа ернĕ йывăç хăйĕн тĕсне çухатать, тĕттĕмленет, çуркаланать, тепĕр чухне тĕпренет те. Кăмпа 5-6 уйăхран пĕренехăмана юрăхсăра кăларма пултарать. Уйрăмах – нўрленсе, йĕпенсе тăраканскерне.**

Урай хăми çирĕп пултăр тесен тĕп сак айĕнчи тăпрана извеç е вак чул, цементпа хутăштарнă типĕ тăм сапса таптамалла. Урай хăми çĕртен сахалтан та 30 сантиметр çўлерех пулмалла. Урай кашти тăпрана перĕнмесен те аван. Сывлăш выляма урайĕнче вентиляци решетки е хушăк кирлĕ.

Куç тĕлне пулнă кăмпана вара тўрех тасатмалла. Юрăхсăр тухнă хăма-пĕренене май пур пулсан çĕнетмелле. Кăмпа суранлатнă вырăнсене касса илсен те юрать. Турпаса, кăмпа ан сарăлтăр тесен, çийĕнчех çунтармалла.

Кăмпаран тасатнă вут-хăмана пĕр-икĕ хутчен химии растворĕ сĕрмелле. Ку тĕллевпе 3 процентлă фторлă е 2 процентлă кремнефторлă натри, 5 процентлă кремнефторлă аммони е хлорлă цинкпа усă курма юрать.

3 процентлă фторлă натри пултăр тесен 30 грамм им-çама 1 литр вĕри шыва ямалла, исленичченлайăх пăтратмалла. Кăмпаллă вырăна кисткĕпе вĕри шыв сĕрмелле е сирпĕтмелле. Ку ĕçе 2-3 уйăхра пĕрре туса ирттермелле.

Уйрăмах вăйлă сиенленнĕ вырăнсене сĕрме ятарлă паста хатĕрлемелле. 1 тăваткал метр хăма-пĕрене таврашне сĕрме 150 грамм фторлă натри, 135 грамм çуллă тăм тата 200 грамм шыв кирлĕ. Шыва вĕретмелле те натри хушмалла, майĕпен тăм ярса пăтратмалла. Унпа пĕрене таврашне пĕрре сĕрни те çителĕклĕ – кăмпа текех ўсмĕ.

## ПАХЧАÇĂ КĔТЕСĔ

# Хăяр тухăçлăхĕ



**Юлашки вăхăтра хăяр ўстерейми пултăм. Е çулçи вăхăтсăрах сарăхма пуçлать, е вĕтĕ шăна тапăнать. Ан чирлетĕр тесен çимĕçе мĕнпе шăвармалла-ши?**

**ИРИНА.**

Муркаш районĕ.

Хăяра яланах кăнтăрлаччен тата ăшă шывпа çеç шăварăр. Çулçине йĕпетменни аванрах. Им-çамне пĕчĕк виçепе сапкаласах тăрăр. Чирлĕ çулçисене çийĕнчех татса пăрахăр.

Хăяра тĕрлĕ чир-чĕр çыпăçасран çакнашкал хутăшпа шăвармалла. 10 литр шыва 1 стакан сĕт, 10 тумлам йод, 1 апат кашăкĕ апат соди, хуçалăх супăнĕн çур пайне ярса шĕвек хатĕрлемелле. Пушă чечексем пуласран çакнашкал хутăшпа сирпĕтмелле. 10 литр шыва пĕр чей кашăкĕ бор йўçекĕ ярса хăяра 10 кунра пĕр хутчен сирпĕтмелле. Çакна та шута илĕр, çак çимĕçе кĕлчечек çывăхне лартма юрамасть. Кăткăсем чечек çинчи вĕтĕ шăнана хăяр çине сĕтĕрĕç. Бактериозран сыхланас тесен юнашар ыхра е сухан лартăр. Хăяр ўснĕ вырăна кĕркунне сĕлĕ акса хăварни аван /пĕр тăваткал метра – 100-150 грамм/. Вăл 18-20 сантиметр çўллĕше çитсен йăрана чавса кăпкалатăр. Çакă çĕре пулăхлатма, тăпрана сипleме май парать.

## СЫВЛĂХ

# Усăллă та, сиенлĕ те...





**Эмел курăкĕ сиен те кўме пултарать. Çавăнпах сиплев пуçличчен фитотерапевтсемпе канашламалла. Халăх мелĕпе усă куракансен çакна пĕлни ытлашши пулмĕ.**

**Сиплĕ авран** /авран лекарственный/ питĕ наркăмăшлă, çавна май çак курăк шывне ĕçмесен лайăхрах. Ўсен-тăран организма виçерен ытларах лексен хăстарма пуçлать.

**Ăншăрт курăкĕпе** /адонис весенний/ те асăрханса усă курмалла.

**Шурлăх аирĕн тымарĕ** /аир обыкновенный/ хырăмлăх ярăх ĕçлекенсемшĕн уйрăмах сиенлĕ.

Пĕвер, ват хăмпи чирĕсемпе аптăрасан, геморрой нушалантарсан, амалăхран юн кайсан, çие юлсан **алоэ** сĕткенĕпе сипленмелле мар.

**Ухмах йывăççипе** /багульник болотный/ виçине пĕлмесĕр усă курсан хырăмлăхпа пыршăлăх тракчĕн лăймака сийĕ хĕрелсе шыçать.

**Кушак кĕпçипе** /бедренец или анис обыкновенный/ апат пĕçернĕ чухне усă кураççĕ. Ытларах ярсан çак курăк ўт-тир чирĕ пуçарма пултарать.

**Тилпĕрен** /белена черная/ наркăмăшлă пулнине те асра тытмалла.

**Шурă хурăн** /береза бородавчатая/ пўрене усал витĕм кўрес хăрушлăх пур. Тухтăр ирĕк парсан кăна ўсен-тăран кăчкин шывне шăк хăвалама ĕçме юрать.

**Сарă кушак ури** /бессмертник/ юн пусăмне хăпартать. Гипертонипе аптăракансемшĕн сиенлĕ.

# Сиплĕ хупах

**Яппун çĕршывĕнче хупаха ятарласа пахчара ытти çимĕçпе тан пăхса ўстереççĕ.**

Хупах /куршанак/ шăк, тар хăвалакан, юна тасатакан, шыççа чакаракан курăк шутланать. Кишĕр, петрушка, пастернак вырăнне те усă курма пулать унпа. Тымарне чĕрĕлле, пĕçерсе, кăмакана хывса çиеççĕ, катлет, пашалу таврашĕ хатĕрлеççĕ, яшкана çĕрулми вырăнне те яраççĕ.

Çўç тăкăнсан пĕр тан илнĕ хупах тымарĕпе хĕç курăкĕн /аир/ тымарне хутăштармалла. Пĕр литр шыва çак хутăша ултă кашăк чухлĕ ярса 15 минут вĕретмелле, сăрăхтармалла, пуçа сĕрмелле.

Ўте пĕçертсе ярсан, экзема, псориаз, шатрашка тата ўт ытти чирĕ асаплантарсан вĕреме кĕнĕ тăвата стакан шыва тăвата кашăк хупах тымарĕ ярса «шыв мунчинче» темиçе сехет тытмалла, унтан çавнашкал маç хатĕрлемелле: хупах шывне /пĕр пай/ тăварламан услам çупа /4 пай/ хутăштарса лайăх пăтратмалла, ыратакан вырăнсене сĕрмелле.



Артрит, ревматизм, подагра, остеохондроз чирĕсем аптратсан япаласен çаврăнăшне лайăхлатма тин вĕренĕ икĕ стакан шыва пĕр кашăк чухлĕ хупах тымарĕ хушса икĕ сехет лартмалла, сăрăхтармалла, кунне виçĕ-тăватă хут, апатчен çур сехет маларах çуршар стакан ĕçмелле.

Сыпăсен ревматизмĕ пулсан тин кăларнă 200 грамм чухлĕ тымара /кĕркунне хатĕрлемелле, пĕр çулталăкран ытла ўсни кирлĕ мар е çу уйăхĕнче чавса кăлармалла/ пĕр литр шыва ярса тĕттĕм вырăнта 14 кун лартмалла, кунсерен пăтратмалла, пĕр чей кашăкĕ чухлĕ настойкăна малтанах пĕр тумлам хушса ĕçмелле. Кашни кун пĕр тумлам хушса пымалла, çапла ултă тумлама çитермелле. Кайран чакарса пырса каллех пĕр тумлама хăвармалла. Унтан каллех тепĕр хут: малтан ўстерсе пырса, кайран чакарса, çапла – сывалса çитиччен, хăвăра лайăх туйма пуçличчен. Хупах шывĕпе сипленнĕ хушăрах çак настойкăна ыратакан вырăна та сĕрмелле.



ЧУНРИ

# Унсăр пурăнаймăп-ши?

Ваньăпа пĕрлешнĕренпе кĕçех вунпилĕк çул çитет ĕнтĕ. Çынсем пирĕн пирки шăкăл-шăкăл çеç пурăнатпăр тесе шухăшлаççĕ-тĕр. Ара, килти çӳппе урама илсе тухмастпăр та. Ывăлăмăрпа хĕрĕмĕр те чиперех çитĕнеççĕ.

Килĕштерсе, юратса пурăнасси пулмарĕ. Çавăнпах пĕрпĕриншĕн эпир, юнашар çывăрнине пăхмасăр, пачах ют. Чунсемпе те, шухăшсемпе те расна тĕнчере пурăнатпăр. Пире пĕрлештерекенни те – ачасем çеç.

Паллах, эпĕ те Ванюка савмасăр качча тухман. Çав тери кăмăллаттăм ăна. Мĕн чухлĕ каччă чупатчĕ хыçăмран! Хваттерли, машинăлли, чиперри, кĕрнекли... Эпĕ вара вĕсенчен нимĕнпе те уйрăлса тăман йĕкĕте килĕштертĕм. Питĕ илемлĕ тесе те калаймастăп упăшка çинчен. Анчах чĕре курмасть те, илтмест те. Пурнăçра епле çулпа каймаллине те калаймасть вăл.

Икĕ çул туслă çӳренĕ хыççăн пĕрлешрĕмĕр. Эпĕ ун чухне çирĕмреччĕ, Ваня – çирĕм пĕррере. Техникумра вĕренекен упăшкам пĕрлешсен çур çултан диплом илчĕ. Эпĕ тата икĕ çул вĕрентĕм-ха. Çавăнпах пурăнма аттепе анне, хунямапа хуняçа пулăшрĕç. Ара, выçă лараймастпăр-çке. Ваня – ял ачи. Паллах, унта хăнана çеç çӳрерĕмĕр, манăн аттепе аннепех пурăнтăмăр.

Çулталăкран ывăлăмăр çуралчĕ. Çемье хушăнсан тăвăрланчĕ те çине тăрсах хваттер туянтăмăр. Аттепе анне нумай пулăшрĕç. Упăшкам та Мускава çӳреме тытăнчĕ. Ун чухне аякри хулана кашни арçыннах тухса каймастчĕ-ха. Çавăнпах ăна тепĕр чухне ярассăм та килместчĕ. Çамрăк хĕрарăмăн мăшăрĕпе уйрăм пурăнас килтĕр-и? Хулара та ĕç чылай-çке. Вăл вара хваттершĕн хăвăртрах тӳлесе татас тесен пысăк укçа кирлине калатчĕ. Çавăнпах тепĕр чухне уйăхĕ-уйăхĕпех таврăнмастчĕ.

Эпĕ унсăр тунсăхлаттăм. Кĕтеттĕм. Юрататтăм ăна. Вăл та çемйишĕн тунсăхланине калатчĕ. Анчах арçын кăмăлĕ урăхларах çав. Аякри хулара урăх хĕрарăмсемпе явăçнине те сисеттĕм. Çук, вĕсемпе çыхланнăран упăшкам укçасăр таврăнман. Перекетлĕччĕ вăл. Тепĕр чухне хыткукарланать те – çын шучĕпе ĕçсе-çиме хăять.

Мускавран таврăнсан та киле килместчĕ тепĕр чухне. Юлташĕ нумайччĕ те пĕрле ĕçетчĕç, каçхи клубсене те çӳретчĕç. Еркĕнĕсем те сахал марччĕ Ванюкăн. Çакна, паллах, хăй каламан. Хĕрарăм ахалех туйăмлă-сисĕмлĕ. Пепкемĕре çывăрттарсан та Иван таврăнасса чӳречерен пăхса мĕн чухлĕ кĕтмен-ши? Вăл вара лачкам таврăнатчĕ. Ури çинче те тăраймастчĕ тепĕр чухне. Хушăран шăнкăравласа хăй ăçта выртнине пĕлтеретчĕ. Эпĕ ăна илме тухса вĕçтереттĕм – çавăтса килеттĕм.

Паллах, мăшăра юратнăранах чăтнă çакна. Çын умĕнче те йĕркеллĕ курăнас тенĕ. Кӳренме те пĕлместĕм. Юттисем патне туртăннине те каçараттăм. «Çамрăк-ха, вăхăт иртнĕ май лăпланĕ», – теттĕм. Çавăнпах хĕрарăмсем пирки нăрласа та ывăнтармастăм.

Мускава икĕ çул майлă çӳресен Иван тата инçерех çула тухрĕ. Висĕ пӳлĕмлĕ хваттершĕн тӳлесе пĕтерсен тепĕр хваттер туянма талпăнчĕ, машинăпа ярăнма ăнтăлчĕ. Çавăнпах çур çуллăх тухса каятчĕ. Эпĕ яланхи пекех ăна кĕтеттĕм: ĕçлеме кайсан – таврăнасса, таврăнсан – киле килессе. Вăл командировкăра чухне ывăлăмăр ашшĕне манма та ĕлкĕретчĕ. Таврăнсан та паламастчĕ ăна. Темиçе кунран çеç хăнăхса çитетчĕ.

Çапла пурăнтăмăр та. Павăл часах ача садне çӳреме пуçларĕ. Эпĕ ĕçе тухрăм. Висĕ çултан упăшка та хуларах аван ĕç тупрĕ. Тинех пĕрле шăкăл-шăкăл пурăнма вăхăт çитнĕ пекчĕ. Çук. Çамрăк чухнехи юрату çухалсах, сĕвĕрĕлсех пычĕ. Пĕр-пĕринчен аякра пурăнни те, упăшкам пĕр хĕрарăм хыççăн теприне юратни те сивĕтрĕ-тĕр.

Эпĕ те хирĕç чĕнмесĕр пурăнайми пулса çитрĕм. Çакăнтан «вăрçăсем» пуçланчĕç те. Киле те таврăнмастчĕ тепĕр чухне. Сăлтавĕ те лайăхчĕ унăн – ĕçре. Чăннипех те час-часах çĕр каçмалли дежурствăсем пурччĕ унăн, тепĕр чухне эрнелĕх командировкăсене те яратчĕç. Халĕ чухлатăп-ха: нумай чухне улталанă.

Паллах, килĕштерменнине кура эпир унпа уйрăлма та пултарнă. Анчах çын çинче намăс каясран хăраттăм. Мăшăрăм лăпланасса, хăйĕн айăпне йышăнасса кĕтеттĕм. Пушшех те – тепĕр хутчен çие юлчĕ. Тен, иккĕмĕш пепке ăна ыттисенчен пистерме пулăшасса та шантăм-ши?

Çак вунпилĕк çулта миçе хĕрарăм патне çитмен пулĕ вăл! Юрать пурте вăхăтлăххисемччĕ. Пĕри вара чутах упăшкасăр хăваратчĕ. Шăпах эпĕ хĕр пĕрчине çуратнă вăхăтра явăçса кайнă иккĕшĕ. Малтанах вăхăта пĕтĕмпех ачасене уйăрнăскер çакна асăрхамарăм та. Тепĕр тесен, упăшкам çине алă та сулнăччĕ. Çӳретĕрех. Ваня киле пушшех таврăнми пулчĕ. Вĕçсе тенĕ пек çӳрерĕ. Çапла çулталăк иртни те сисĕнмерĕ. Часах упăшкам уйрăласси çинчен калаçма пуçларĕ. Юрату туйăмĕнчен сĕрĕм те юлман, пĕтĕмпех çилпе саланнă пулин те сисчĕвлентерчĕ çакă. Ачамсене ашшĕ кирлĕ-çке. Пĕрпĕриншĕн ют пулин те хамăн арçынна урăххине парассăм килмерĕ. Çавăнпах эпĕ те «вăрантăм» та.

Манăн упăшкана вăрлас шухăшлă хĕрарăма шыраса тупрăм. Качча кайман пике пулчĕ вăл. Пирĕн пирки пачах пĕлмен иккен мăнтарăн. Анчах шеллĕп-и ăна? Çапла арçыншăн çапăçма пуçларăмăр та. Пĕр-пĕрне çав тери савнине пăхмасăр сивĕтме тăрăшрăм вĕсене. Упăшкана килтен хăваласа кăларассипе хăратрăм. Хăйĕн мĕнпур пурлăхне ачамăрсен ячĕпе çыртарнăскер нимсĕр юласран та шикленчĕ-тĕр. Асăрханулă пулма тăрăшрĕ.

Çапăçсан-çапăçсан майра та: «Хыçран чупакан ахаль те нумай. Мĕн тери хитрисем те чиперрисем, кăмăллисем вĕсен йышĕнче. Санăн упăшкупа мĕнех тăвăп-ши? Чупкăн, хыткукар... Кирлĕ мар вăл мана. Илсе каях – парнелетĕп», – терĕ.

Çакăн хыççăн хам та çамрăк чухне миçе ырă йĕкĕтрен шăпах Ванюка суйланишĕн ӳкĕнтĕм те. Еплереххисем пурччĕ вĕсен йышĕнче! Халĕ те ăна, çын юлашкине, каялла йышăнатăп. Унсăрăн пурăнаймасран хăратăп-шим? Е мăшкăла ачамсемшĕн тӳсетĕп-и? Е кашни хăтланăвне каçарма вăйхалăм çитет-шим? Юрату та тахçанах çук-çке...

**ТАТЬЯНА.**
Çĕнĕ Шупашкар.

КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

# Эпĕ... канатăп

«Мĕн ĕçлетĕр?» – Мускавран шăнкăравлать мăшăрăм. «Ĕне сурăм. Сыснасене апатлантартăм. Чăх-чĕпе витене хупрăм. Халĕ... сана кĕтме пуçларăм», – ăнлантартăм ăна. Арçын ыран килсе çитсенех пурнăç çăмăлланать-ха та. Ун чухне килти пĕтĕм ĕçе хăй çине илет вăл. Эпĕ вара... канатăп.

Тĕпелте такам утнипе вăранса кайрăм. 3 сехет кăна çитет. Упăшка тăнă иккен. Ыйхă килмесен вырăн çинче выртма юратмасть вăл: е пӳртре, е картишĕнче ĕç тупать. Эпĕ татах çывăрса кайнă. Ах, ыйхи мĕнле тутлă. Сăмсана кăтăклакан кукăль шăршипе çеç куçа уçрăм. Мăшăрăм пасăрах чуста çăрнă иккен.

«Атя, лар сĕтел хушшине. Халь кăна кукăль пиçсе тухрĕ. Вĕрилле çи», – ман йĕри-тавра чупкалать кил хуçи. Арăмĕ çĕрулмипе какай кукăлĕ килĕштернине пĕлет вăл. Ăна чи малтан духовкăна лартнă. Тăпăрч пӳремечне те сăн кĕнĕ. Ăна ачасем юратаççĕ. Тĕпелте ăшталанакан арçынна чăрмантарас мар тесе ĕçе тухса вĕçтертĕм.

«Чунăм, мĕнле кун паян?» – телефонпа тĕпчет мăшăрăм. «Ытларикун...» – тетĕп. «Миçемĕш-ха?» – хăпмасть манран хайхискер. Календарь еннелле çаврăнсан тин ăнланса илтĕм... Ара, унăн çуралнă кунĕ вĕт. Çĕртме уйăхĕн 9-мĕшне хĕрлĕ тĕспе сăрласах хунăччĕ. Çав ятпа кукăль пĕçернĕ вăл. Эпĕ саламлама та пĕлмерĕм. Юрать-ха кӳреннине кăтартмасть юратнă çыннăм. Апат пĕçерменшĕн те, çи-пуç якатса паманшăн та ӳпкелешнине илтмен. Сивĕ сăмах каласа кăмăла хуçмасть вăл. Ашшĕ-амăшне, ачипăчине, мана юратнине ĕçпе çирĕплетет. Чăнах, мĕн пайлмалла, мĕншĕн вăрçăнмалла пирĕн?

Малтан 3-4 ĕне, 30-шар хур, кăвакал, чăх-чĕп усраттăмăр. «Сана кунĕнçĕрĕн ĕçлеттерес килмест манăн. Килти выльăха пула канма та каймастпăр, хăнара та çĕр выртаймастпăр», – тет упăшка. Çав çулах выльăх йышне чакарчĕ вăл. Пĕр ĕнепе, чăн та, канлĕ. Хамăр килте çук чухне ăна кӳршĕсем сăваççĕ. Унсăрăн малтанхи çулсенче кун сиктерсе духовкăна хур, кăвакал е чăх лартаттăмăр. Халĕ çуллă какай та сахалрах çиетпĕр.



Эпĕ тюльпан, лили, гладиолус юрататăп. Ман кăмăла тупас тесех мăшăрăм çак чечексен тĕрлĕ тĕсне лартса çитĕнтерет. Хăй Мускава тухса кайсан çеç çум курăкне татса тăратăп.

Упăшкана пĕчченех хĕрарăмсем те тĕрлĕ ĕç тума чĕнеççĕ. Кайтăрах, пулăштăрах. Вăл ыттисен енне çаврăнса та пăхмĕ. Эпĕ ăна шанатăп.

Акă халĕ те картишĕнче пăта çапни илтĕнет. Каллех тем ăсталать ĕнтĕ. Кĕçех ĕнене хирĕç кайĕ вăл.

«Пӳртрен ан тух. Пур ĕçе те хамах тăвăп», – чӳречерен пăхнине курсан кăшкăрчĕ мăшăрăм. Вăт çавнашкал арçынна епле юратмăн?

**Лира ЛЕВОЧКИНА.**

ТЕАТР

# Нина Яковлевăн ыратăвĕ тата юратăвĕ...



**Раççей тата Чăваш халăх артистки, Чăваш патшалăх академи драма театрĕн актриси Нина Яковлева юбилейне халалласа тунтикун Шупашкарти Чăваш наци музейĕнче «Чун-чĕрем хавалĕ – театр…» ятпа курав уçăлчĕ.**

Нина Яковлева хăй пурнăçĕнче çĕр-çĕр сăнар калăпланă. Шалтан тапса тăракан иксĕлми пултарулăхĕпе халăха тĕлĕнтернĕ те, савăнтарнă та, куççуль те кăларттарнă. Драмăра-и, трагедире-и е камитре вылять-и – ăста та пуян сăнарĕсем кирек çăта та витĕмлĕ. Ăшă кăмăллă та сăпайлă, таса чун-чĕреллĕ чăваш хĕрарăмне тата кам ун пек хитре сăнлама пултарĕ-ши? Юлашки çулсенче халăх умне кăларнă «Хурлăхлă хурама сассинче», «Мунча кунĕнче» те ăш пиллĕ те кăмăллă, ырăран та ыра амăшне выляса халăхăн чунчĕрине хускатма, куракансене тарăн шухăша яма, пурнăç çине урăхларах куçпа пăхтарма пултарчĕ вăл.

Çуралнă кунпа Нина Яковлевăна ЧР культура министрĕн пĕрремĕш çумĕ Альбина Алексеева, Чăваш наци музейĕн директорĕ Ирина Меньшикова, Чăваш патшалăх академи драма театрĕн директорĕ Юрий Владимиров, çавăн пекех ĕçтешĕсем, пултарулăх çыннисем саламларĕç. Ентешсемсĕр пулать-и? Ăна Пысăк Енккассисем кăна мар, мĕнпур Вăрмар халăхĕ сума суни, чунтан хисеплени пирки иккĕленмелли те çук. Вăрмар район администрацийĕн культура пайĕн пуçлăхĕ Ирина Дмитриева татах та çитĕнÿсем тума, нумай-нумай çул савăнтарса пурăнма сывлăх сунчĕ Нина Михайловнăна. «Еник» фольклор ансамблĕ «Эс паян пуринчен телейли» илемлĕ юрă парнелерĕ.

Куравра – Нина Яковлевăн ачалăхĕ, ашшĕамăшĕпе тăванĕсем, ашшĕн вăрçăран янă çырăвĕсем, пурнăçĕпе пултарулăхĕ, студент çулĕсем, çемйи, хитре те пуян кун-çулĕ... Ăшă сăнÿкерчĕксем çинчен куçа илме çук. Пĕр тĕлте Нина Михайловна мăнукĕсемпе, тепĕр çĕрте – Пысăк Енккассинче, амăшĕ патĕнче... Театра чунтан парăннăскер пушă вăхăтне ăстан тупни те тĕлĕнтерет. Вăл çекĕлпе çыхма ăста пулнине кураври тĕлĕнмелле хитре кофтăсемпе тутăрсенче куртăмăр. Статуэткăсем пуçтарасси – чи юратнă кăмăл тураменчен пĕри.

Нина Яковлевăн чи çывăх тантăшĕсенчен пĕри вăл – Раççей тата Чăваш халăх артистки, Чăваш патшалăх академи драма театрĕн артистки Нина Григорьева. Вĕсем иккĕшĕ вунçичĕ çулранпа пĕрле.

– Эпир Нина Яковлевăпа пĕр пÿлĕмре пурăннă, пĕрле вĕреннĕ, Шупашкара та пĕрлех килнĕ. Çак тарана çитсе пĕр-пĕринчен нихăçан та уйрăлман, – терĕ Нина Ильинична. – Тĕлĕнме пăрахаймастăп Нинăран. Шăмми çук пулĕ, шăнăрĕ кăна пулĕ унăн. «Праски инке мăнукне авлантарать» камитре 17 çулти хĕрачаран та ирттерет пирĕн Нина Михайловна. Арçын ача ролĕнчен тытăнчĕ вăл вылями. Бандит хĕрачана та, 90 çулти карчăка та ăста калăплатчĕ. Тăвай районĕнчи пĕр ялта выляни халĕ те асрах. Ун чухне çамрăк пулнă эпир. Нина – кинеми ролĕнче. Кайран тепĕр яла кайма тухрăмăр. Çула май пирĕнпе пĕр старик ларса пычĕ. Нина гримне тасатманччĕ. Хайхи старик: «Юл-ха, юл-ха. Арăм çук ман. Вĕлле хурчĕсем тытатăп, сана пыл кăна çитерсе пурăнăп», – тесе йăлăнма тытăнчĕ хайхискер, – театрти интереслĕ самантсене ăшшăн кулса аса илчĕ Нина Григорьева.

– Паянхи кун та кулянса пурăнатăп. Эх, мĕншĕн ун чухне çав старикпе юлман-ши? – шÿтлесе те илчĕ менелникре Нина Михайловна хăй сăмах илнĕ май. Ачалăхĕпе, пултарулăх çулĕпе паллаштарчĕ вăл. Пĕчĕк Нина ашшĕнчен çулталăкра тăрса юлнă. «Часах хĕрÿ çапăçăва кĕретпĕр. Унтан никам та чĕрĕ тухаймĕ. Сан телейÿ пулсассăн вилмĕп. Эпĕ вăрçăра пуçăма хурсан эсĕ пĕчченех ан пурăн, çемье çавăр, пĕчĕк хĕрĕме ан пăрах», – мăшăрĕ патне çакнашкал çыру янă Ленинград çывăхĕнче тăшмана хирĕç кĕрешнĕ Нина Яковлевăн ашшĕ. Çак хăрушă ункăран чĕррĕн тухайнă ун чухне Михаил Филиппов. Анчах та тепĕр çур çултан, 1943 çулхи кăрлачăн 24мĕшĕнче, юлнă Ленинград çĕрĕ çинче ĕмĕрлĕхех куçне хупнă.

– Тăван аттене курман эпĕ. Çакă кăна ман пурнăçăмри пĕртен пĕр ыратăвăм. Манран килмен-çке ку, пĕтĕмпех ылханлă вăрçă айăплă... Ытти енчен пĕтĕмпех йĕркеллĕ, ниммĕншĕн те ÿкĕнмелли çук. Манăн пурнăçра чи çывăх та хаклă çыннăм – Яковлев. Анчах та эпĕ режиссера мар, студента, ĕçтеше качча тухнă. Куракансем юратаççĕ. Урăх тата мĕн кирлĕ? – çакăн пек сăмахсемпе вĕçлерĕ хăйĕн сăмахне 75 çул тултарнă Нина Яковлева.

Театр çынна хăпартлантарать, çунатлантарать, пурăнма вăй-хăват хушать. Нина Михайловнăн çутçанталăк панă пултарулăхĕн хăвачĕ иксĕлми. Халăх чунтан юратакан артисткăна тата нумай-нумай çул çĕнĕ рольсемпе савăнтарма, 101 çула çитиччен пурăнма сунчĕç çуралнă куна пухăннисем. «Чăваш драма театрĕн чи çутă çăлтăрĕсенчен пĕри» тесе ахальтен палăртмарĕç пулĕ менелникре Нина Яковлева пирки. Апла çак çăлтăр нумайччен ялкăшса, çуталса тăтăрччĕ!

**Елена АТАМАНОВА.**

Сергей ЖУРАВЛЕВ сăнÿкерчĕкĕсем.





*Александр АРТЕМЬЕВ*

# Ан авăн, шĕшкĕ!

**/Малалли. Пуçламăшĕ 17-21-мĕш номерте/.**

– Кунта пире фашистсем кунне виçшер атакăлаççĕ, – ăнлантарать мана связной, – пулăшу çитиччен тытăнса тăрас пулать.

Ку хыпар мана пушшех пăлхантарса ячĕ: пултарайăпши пĕччен çыхăну тытма? Курмангалиевпа Виктор пĕрле пулсан вут ăшне те хăрамасăр кĕрĕттĕм... Канашлама никам çук, çĕнĕ салтаксене пĕрне те палламастăп, çитменнине, кашниех хăй ĕçĕпе аппаланать.

– Связист, сана чĕнеççĕ, – терĕç мана. Кам-ши тетĕп. Çав самантрах путвала хамăр замполит кĕрсе тăчĕ.

– Сывă-и, Атăл каччи! – саламларĕ вăл мана курсанах.

– Сывлăх сунатăп, капитан юлташ! – тетĕп чыс парса.

Ленсе тăма юрамасть, иккĕлентĕн – шикленме пуçлатăн, шиклентĕн – пĕтрĕн. Вăрçă саккунĕ çапла вăл, тăванăм!» Уйрăлнă чух пушшех те савăнтарчĕ вăл, пурне те пĕлекенскер, мана хулпуççирен лăпкаса илчĕ те: «Ну, – терĕ, – ан авăн, шĕшкĕ!»

Ырă сăмах – ырă кун пек, теççĕ. Замполитпа каласнă хыççăн хама хам çунатланнă пек туйрăм.

Виçĕ талăк хушши çапăçу шавĕ лăпланмарĕ. Лини пĕрехмай тапăлать, сыпса та çитермелле мар, лара-тăра пĕлмесĕр виçĕ талăк уй тăрăх чупрăм. Виççĕмĕш кун ирхине, çапăçу шавĕ кăштах лăпплансан, комбат вырнаçнă путвала кĕтĕм те пĕр тĕттĕм кĕтесе кукленсе лартăм. Халĕ çеç тутлăн тĕлĕрсе кайнăччĕ... Сасартăк килкартинче темисе мина ÿксе çурăлчĕ, пăшал сасси илтĕнсе кайрĕ.

– Лар, лар, – терĕ те замполит, хăй те, манпа юнашар ларса чикаркка чĕркеме пуçларĕ. Хурçă каскине хывса чĕркуççи çине хучĕ, кăвакарма пуçланă çÿçне тÿрлеткелесе шăлса илчĕ, вара чикарккине вăраммăн ĕмсе тĕтĕмне вĕрсе кăларчĕ те кăмăллăн ялкăшса кулчĕ. Унăн пĕркеленнĕ пичĕ кулнă чухне çамрăкланса каять, кăвак куçĕсем ăшшăн ялкăшаççĕ.

Замполит пирĕн батальона килни нумаях пулмасть. Çапах вăл кĕске вăхăтрах пур салтака та паллакан пулчĕ, пурин ятне те астăвать. Ульяновск вырăсĕ вăл. Хĕрĕхсенчен тахçанах иртнĕ ĕнтĕ хăй, пурпĕрех тÿнĕ питĕ çамрăк. Каччăсемпе шÿт тукаласа илет, вăтă салтаксемпе çемье çинчен калаçать. Пĕлет вăл этем чунне, кампа мĕн çинчен сăмах пуçармаллине питĕ ăста тавçăрать – илтсен тĕлĕнсе кайăн. Курмангалиевпа кишмиш çинчен пуплет, Викторпа – Ленинград çинчен, поварпа – тĕрлĕрен апата мĕнле хатĕрлесси çинчен, Çĕпĕр снайперĕсемпе ухута çинчен, манпа – Кольцовка колхозĕ çинчен; е пĕрре тата Нарспие те асăнчĕ: «Константин Иванов пирĕн хулара вĕреннĕ», – терĕ. Итлес килет вăл калаçнине. Темĕн те пĕлет вăл. Уйрăммăнах вăрçăри лару-тăру çинчен такам та ăнланмалла каласа парать. Вăл каланине итлетĕн те, вăй кĕнĕ пек туйăнса каять, шанчăк çирĕпленет, тăшмансене пĕтĕм чунтан курайми пулатăн. Çавăн пек вăл пирĕн замполит. Темшĕн-çке вăл мана хам аттем пекех туйăнатчĕ.

Нимĕç хурахĕсен ирсĕр ĕçĕсем çинчен, вĕсем пире чура туса хума хапсăнни çинчен замполит чуна витермелле каларĕ. Пĕтĕм чун-чĕререн пăлханса итлерĕм ăна. Вăхăт иртни те сисĕнмерĕ. Вăл юлашкинчен каланă сăмахсем халь те чĕремрех: «Асту, Астров, хăрушă самантра иккĕ-

– Фашистсем çавăрса илеççĕ! – кăшкăрчĕ тахăшĕ путвал чÿречинчен. Сăрр! туса илчĕ çанçурăм.

– Пурте – çÿле! – хаяррăн кăшкăрчĕ комбат. Хăй чи малтан алăк патне ыткăнчĕ.

Халиччен фашистсене кун пекех çывăхран курманччĕ. Сăрă кăвак шинеллĕскерсем пĕртен-пĕр «тигр» хÿттине пытанса пирĕн пÿрт еннелле чупаççĕ, пĕр рота чухлĕ пулĕ хăйсем. Вĕсем автоматсемпе персе хамăр çинелле килнине асăрханă самантрах тăшман пире шеллес çуккине, вăл хамăра вĕлерме килнине нихçанхинчен хытăрах ăнлантăм, фашистсем пире тĕп тума тапăннине чĕрепе кăна мар, пĕтĕм çан-çурăмпа туйса илтĕм. Ак ĕнтĕ вĕсем пирĕн малти траншейăсенчен инçех те мар... Хăрушă самант!

Килкартине сиксе тухаймарăмăр – нимĕç снарячĕ пирĕн çурта лекрĕ. Пÿртри салтаксем çине кирпĕчпе черепица ишĕлчĕкĕ йăтăнса анчĕ, нумайăшне аяла турĕ; аманнисем йынăшни илтĕнчĕ... Çав самантрах тăшман танкĕ те чарăнчĕ, хура тĕтĕмпе хупланчĕ. Ăна сулахай айлăмри хамăр артиллеристсем персе тивертрĕç пулас е вăл хăех мина çине пырса тăрăнчĕ... Çывăххах çитнĕ фашистсем пурпĕр чупма чарăнмарĕç. Часах пирĕн килкартине те çитсе кĕретчĕç-и, тен, – çав хушăра хамăр çумри чул вите чÿречинчен пулемет кĕпçи курăнчĕ, тăшман çине вут-хĕм сирпĕте пуçларĕ.

Нимĕçсем выртрĕç те вите çинелле автоматсемпе пеме пуçларĕç, унтан каллех сиксе тăрса малалла ыткăнчĕç. Эпир чун пек кĕтсен те пирĕн пулемет хальхинче сасă памарĕ.

**/Малалли пулать/.**

# Ашшĕпе ывăлĕ тата тусĕсем

***Суд умне Канаш районĕнче пурăнакан 40 çулти арçын тата 17-20 çулсенчи ултă каччă /пĕри – хайхи арçыннăн ывăлĕ/, Шупашкарта тата Çĕнĕ Шупашкарта пурăнаканскерсем, тăрăççĕ. Следстви комитечĕн республикăри управленийĕн уйрăмах пĕлтерĕшлĕ ĕçсене тĕпчекен пĕрремĕш пайĕ тĕпчесе пĕтернĕ уголовлă ĕçре çак ушкăн преступленийĕсен икĕ теçетке ытла саманчĕ сăнланнă.***



● *Прокурор пулăшуçи Альберт Петров, Владимир Купцов /следователь ролĕнче/, Игорь Ильин /наркобарон ролĕнче/ тата Владимир Синяев режиссер.*

Следстви версийĕпе килĕшÿллĕн çак ушкăна химиксен хулин 18 çулти çамрăкĕ чăмăртанă. 2013-2014 çулсенче çамрăксем Интернет урлă «спайссем» – наркотик шутланакан хутăшсем – туяннă. Вĕсене килĕсенче упранă, пĕр пайне Шупашкарти, Çĕнĕ Шупашкарти тата Канашри ятарласа хатĕрленĕ вăрттăн вырăнсенче пытарнă. Кайран Интернет урлă çырусем çырса çав наркотике çынсене туянма сĕннĕ.

2014 çулхи июльте «спайспа» тивĕçтерекен çын вĕсене транспорт-экспедици компанийĕ урлă 200 грамм наркотик ярса панă. Хутаçа музыка оборудованине чиксе пытарнă. Ăна пачах урăх çын ячĕпе ăсатнă, лешĕ посылкăра юраман хутăш пулнине тавçăрман та. Апла пулин те СК тата Наркотĕрĕслев службин республикăри управленийĕн сотрудникĕсем преступниксем усă куракан вăрттăн схемăна тăрă шыв çине кăларма пултарнă. Пакунлисем оперативлă шырав мероприятийĕсем ирттернĕ май саккунсăр çаврăнăшран 370 грамм ытла «спайссем» туртса илнĕ.

Палăртни вырăнлă: шăпах 18 çулти çамрăк çын, ушкăн йĕркелÿçи, хăйĕн ашшĕне тата тусĕсене преступленисем тума явăçтарнă. Следстви иккĕленмест: ушкăн членĕсен айăпне ĕнентермешкĕн материал çителĕклĕ. Уголовлă ĕçе тишкерме Шупашкарти Калинин районĕн судне ярса панă.

Сăмах май, республикăн право хуралĕн органĕсем наркотиксен саккунсăр çаврăнăшĕне кĕрешес ĕçе преступленисене тупса палăртса, вĕсене уçса парса кăна хутшăнмаççĕ. Хăй вăхăтĕнче эпир Чăваш Енре Владимир Синяев режиссер наркотиксен суту-илĕвĕпе кĕрешнине сăнлакан илемлĕ фильм ÿкерме пуçлани çинчен пĕлтернĕччĕ. Малтанлăха палăртнă «Ветки» фильм ÿкерĕвне нумаях пулмасть каллех республика прокуратурин çуртĕнче малалла тăснă.

Ку хутĕнче икĕ сюжет ÿкернĕ. Пĕри – преступниксен наркотиксен çаврăнăшĕпе аппаланакан, çынсене вĕлерекен ушкăнĕн хăрушă ĕçĕсене тĕпчекен следователь допросĕ. Иккĕмĕш сюжетра – прокурор следователь вилнĕ май уголовлă ĕçе тĕпчеме панă çĕнĕ çынпа ирттерекен ĕçлĕ канашлу.

Ӳкерĕве республика прокурорĕн общественноçпа çыхăну тытассине тивĕçтерекен аслă пулăшуçи Альберт Петров хутшăннă. Фильм кăçалах Чăваш Енри киноэкрансем çине тухмалла.

■ **Н.АНТИПОВ**

# Моисеевпа Галочкин приговорне пăрахăçланă

***Сĕнтĕрвăрри район администрацийĕн пуçлăхĕ пулнă Юрий Моисеев тата Сергей Галочкин адвокат тĕлĕшпе палăртнă приговора пăрахăçланă. Çакăн çинчен республикăн Аслă сучĕн сайтĕнче вуласа пĕлме пулать.***

Аса илтерер: Юрий Моисеева взятка илнĕшĕн тата ултавшăн айăпласа çулталăк пуçламăшĕнче 11 çул çурăлăха ирĕклĕхсĕр хăварма, 280 млн тенкĕлĕх /взяткăн 70% виçи чухлĕ/ штрафлама йышăннăччĕ. Сергей Галочкина 4 çуллăха ирĕклĕхсĕр хăварнăччĕ, 8 млн тенкĕлĕх штрафланăччĕ.

Район администрацийĕн экс-пуçлăхĕ тĕлĕшпе тĕп хулари Ленин районĕн сучĕ палăртнă приговор ытла та хаярри пирки ун чухнех калаçу пулнăччĕ-ха. Халь вара Аслă суд айăплава пăрахăçласа уголовлă ĕçе çĕнĕрен тишкерме район суднее ярса панă. Эпир пĕлнĕ тăрăх – çак йышăнăва судăн пĕрремĕш инстанцийĕ ĕçе тишкернĕ чух уголовлă процесс саккунĕсене пăснă тесе сăлтавланă. Çавна май халĕ ĕçе судăн çĕнĕ йышĕ тишкерĕ.

**К.НИКОЛАЕВ.**

# Герой суд умне тăрать

***Шупашкарти Мускав районĕн судĕнче юлашки вăхăтра саккунсăр астармăш вăйăсемпе çыхăннă ĕçсем хисепре тени те вырăнлă. Нумаях пулмасть çеç пĕр ĕçпе пăнчă лартнăччĕ. Черетре – тепри.***

Маларах суд район прокурорĕн Шупашкарта пурăнакан 6 çынран преступлени туса пухнă тупăша шыраса илме тăратнă тавăçне тивĕçтернĕччĕ. Прокурор хăйĕн ыйтăвне Мускав районĕн сучĕн Семен Чинаев, Сергей Васильев, Владислав Самарин, Роман Смирнов, Евгений Александров тата Олег Борисов тĕлĕшпе палăртнă приговорĕ вăя кĕнипе сăлтавланă. Вĕсене Уголовлă кодексăн 171.2 статйин 2-мĕш пайĕпе /саккуна пăсса астармăш вăйăсем йĕркелени/ айăпланăччĕ. Çак çынсем каварлашнă ушкăна пĕрлешсе преступленисем тунă, вĕсенчен шайлашуллă виçепе шыраса илмелли тупăш виçи – 7 млн тенке яхăн. Йышăну вăя кĕменха.

Июнĕн 9-мĕшĕнче вара Мускав районĕн судĕнчех тепĕр ĕçе тишкерме пуçланă. Ун тĕлĕшпе массăллă информаци хатĕрĕсен интересĕ пысăкки ăнсăртран мар. Суд тенкелĕ çинче паллă çын-çке – 35 çулти Раççей Геройĕ Евгений Борисов. Тата – унăн шăллĕ Олег Борисов, Сергей Дмитриев, Юрий Капитонов, Радий Ершов, Сергей Семенов. Пĕрлех – Шупашкарти полици пайĕсенчен пĕрин пуçлăхĕ пулнă 45 çулти Игорь Иванов.

Малтанхи следстви органĕ çак ушкăна та саккуна пăсса астармăш вăйăсем йĕркеленĕшĕн айăплать. Иванов, полицейски пулнăскер, каварлашнă çак ушкăн членĕсенчен вĕсен преступленийĕсене курмăш тунăшăн, саккунсăр ĕçхĕле пÿлмешкĕн тивĕçлĕ мерăсем йышăнманшăн, преступниксене полици вăйă оборудованине туртса илес, ушкăн ертÿçисемпе членĕсене явап тыттарас тĕллевпе йĕркелекен рейдсем пирки маларахах пĕлтерсе тăнăшăн взятка илнĕшĕн суд умне тăнă.

**К.АНТОНОВ.**

# Чее Саидбек

***Шупашкарти Ленин районĕн сучĕ 1978 çулта çуралнă Саидбек Маджидов приговорне палăртнă. Ăна Уголовлă кодексăн 159 статйин 2-мĕш пайĕпе айăпласа çулталăк çурăлăха ирĕклĕхсĕр хăварма, колони-поселение ăсатма йышăннă.***

Уголовлă ĕçе Федерацин хăрушсăрлăх службин республикăри управленийĕн следстви пайĕ пуçарнă, вăлах тĕпченĕ. Следстви тата суд çирĕплетнĕ тăрăх – 2013 çулта Маджидов, Раççей гражданинĕ, Чăваш Енри таджик диаспорин темиçе представителĕн пурлăхне пĕрре кăна мар вăрланă. Улталаса, хăйне шаннипе усă курса вĕсене шăнман пăр çине лартса хăварнă. Хăйĕн çапла тумалли майĕсем те пулман, апла пулин те Саидбек патшалăх влаçĕн органĕсенче тĕрлĕ ыйтусем татса памашкăн ФХСăн регионти управленийĕн сотрудникĕсене взятка парăп тесе йăхташĕсене улталама пултарнă.

Шар курнисенчен пĕри каланă тăрăх – Маджидов унăн укçине йăлара усă курмалли техника туянатăп тесе вăрланă. Çак техникăна Хăрушсăрлăх службин сотрудникĕсене взятка шучĕпе парăп тесе шантарнă. Каярахпа Саидбек хăйхискере татах техника, тумтир туянтарнă. Вăл унăн право хуралĕн органĕсемпе çыхăннă ыйтăвĕсене татса пама пулăшнă вĕт /тĕрĕссипе, пулăшса нимĕн те туман/, эппин, куншăн тав тумалла...

Çакнашкал майпах вăл таджик диаспорин тата икĕ представительне те улталанă: вĕсене йăлара усă курмалли техника, ытти япала туянтарнă, çак пурлăха вăрланă. Преступник хăйĕн пĕлĕшĕсене кÿнĕ сиен виçи – 70 пин ытла тенкĕлĕх.

Маджидов преступленийĕсем влаç органĕсен чысĕпе ятсумне варалани куçкĕрет. Çавăнпах следстви те çак ĕçе тĕплĕ тĕпченĕ ĕнтĕ – ултавçа туллин явап тыттармашкăн пĕтĕмпех тунă. Приговор – тивĕçлĕ айăплав.

**Н.КОНОВАЛОВ.**

## КĔСКЕН

# Пăшалпа – куçран

***Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Шулю ялĕнче çав кун 44 çулти арçын ялйышпа пĕрле тăванне çурт хăпартма пулăшнă. Кил хуçинчен эрех ыйтнă. Лешĕ ĕç вăхăтĕнче ĕçтерес темен пуль – ярса паман...***

Арçын кÿреннĕ. Килне кайнă, унта эрех ĕçнĕ. Çакăн хыççăн ÿсĕрскер ИЖ сунар пăшалне илнĕ те велосипед утланса стройкăна каялла таврăннă. Ним ăнлантарса тăмасăр тăванне тĕллесе пенĕ. Анчах ăна мар, 35 çулти тепĕр арçынна, нимене пынăскере, лектернĕ. Кăкăрне, сулахай хулпуççине, сулахай куçне амантнăскере пĕр тăхтамасăр больницăна илсе кайма, реанимацие вырнаçтарма тивнĕ.

Ăнман «стрелок» тĕлĕшпе çынна вĕлерме тăнăшăн уголовлă ĕç пуçарнă, ăна тытса чарнă, хупса хунă.

# Миро хĕрарăма «пулăшнă»

***Кăçалхи январĕн 13-мĕшĕнче Армени гражданинĕ 33 çулти Миро Джагоян Етĕрне хулинче банкомат патĕнче чеертре тăнă. Телей тени кĕтмен çĕртен йăтăнса аннă темелле. Анчах çакăншăн халь çирĕп режимлă колонире 8 уйăх иртterme тивет.***

Банк карточки çинчен укçа илмешкĕн пулăшма пĕр хĕрарăм ыйтнă. Вăл каласа пынипе Миро пин-код цифрисен кнопкисене пуснă. Хĕрарăм тимсĕр пулнипе усă курса çаскер карточка çинчен вăл ыйтнинчен ытларах укçа илнĕ, ытлашшине, 5 пин тенке, хăйĕн кĕсйине чикнĕ.

Анчах ултав кĕçех çиеле тухнă. Суд ларăвĕнче Джагоян айăпне йышăннă, сиене туллин саплаштарнă. Апла пулин те унăн преступлени рецидивĕ пулнине кура суд Мирона ирĕклĕхсĕр хăвармалли приговор палăртнă.

# Саккунсăр киленӳ

***Чăнах, хăшĕсем Интернетра мĕнле кăна киленÿ тупмаççĕ! Çав шутра – саккунсăрри те.***

Шупашкарти Калинин районĕн прокурорĕ тĕп хулара пурăнакан 39 çулти Эдуард А. тĕлĕшпе айăплав пĕтĕмлетĕвне çирĕплетнĕ. Ăна УК 242 статйипе айăплаççĕ – Интернет урлă порнографи материалĕсем сарнăшăн.

Ñëåäñòâè èêêåëåíìåñò% À? ðåñïóáëèêè àñë¸ â.ðåí\ çàâåäåíèé. ñåí÷åí ï.ðèí÷å ïðåïîäàâàòåëüòå . =ëåêåí ñêåð: 2011-2014 =óëñåí÷å õ¸é.í êîìïüþòåð.ñåìïå ñàêêóíà ï¸ññà ïîðíîãðàôè ìàòåðèàë.ñåì ñàðîìà óñ¸ êóðí¸? Ï ñåâäîíèì õû=íå ïûòàíñà â¸ë =àâ ìàòåðèàë-ñåíå õ¸é é.ðêåëåí. ñàéòñåíå âûðíà=òàðí¸: â.ñåíå êèðåê êàì òà ï¸õìà ïóëòàðí¸?

Íàì¸ñ \êåð÷.êñåíå ê¸ì¸ëëàêàíñêåðå Óãî-ëîâë¸ êîäåêñ¸í àñ¸íí¸ ñòàòéèïå àé¸ïëàñà 6 =óëë¸õàõ èð.êë.õñ.ð õ¸âàðìà ïóëòàðà==.?

■ **Н.СТЕПАНОВ**



# Саламлатпăр



*Юратнă аннепе аттене, асаннепе асаттене, кукамайпа кукаçие – Елчĕк районĕнчи Çирĕклĕ Шăхальте пурăнакан <u>АРХИПОВСЕНЕ: Евгения Георгиевнăна</u> сумлă юбилейпе, 70 çул тултарнă ятпа, <u>Борис Евдокимовича</u> – çуралнă кунĕпе чи ăшă та çепĕç сăмахсемпе саламлатпăр, çирĕп сывлăх, тулли телей сунатпăр.*

*Хаклă çыннăмăрсем! Ĕçĕр-хĕлĕр сирĕн яланах ăнса пытăр. Пурнăçра кашни утăмăр ырлăхпа, юратупа, çутă ĕмĕтсемпе тултăр. Турă панă кунçулăр вăрăм та çатма пек такăр пултăр. Тавах сире, кил чысĕпе çемье ăшши пулнишĕн.*

*<u>Ывăлĕсемпе хĕрĕсем,</u>*
*<u>кинĕсемпе кĕрÿшĕсем, мăнукĕсем</u>*
*<u>тата кĕçĕн мăнукĕ Карина.</u>*

## ☺И-ХИ-ХИК☺

**Амăшĕ пĕчĕк хĕрачине психиатр патне илсе пынă.**
**– Мĕн ятлă-ха эсĕ, чиперкке? – ыйтать шурă халатли.**
**– Наташа.**
**– Миçе çулта-ха эсĕ?**
**– Пиллĕкре.**
**– Вăт, Наташа, кала-ха, çулталăкăн хăш вăхăчĕ халĕ?**
**– Çулла.**
**– Ну, Наташа, мĕнле çулла пултăр-ха? Ĕнер эсĕ çунашкапа ярăннă-и?**
**– Ярăннă.**
**– Юр кĕлетке калăпланă-и?**
**– Çапла.**
**– Ну, вăт, епле çулла пултăр-ха апла?!**
**– Вăт çапла – ăнланмалла мар çулла!**

* * *

**– Арăм эпĕ ăна урăххипе улталанине сисрĕ.**
**– Темех мар, вăйлă хĕрарăм вăл санăн.**
**– Çавă шиклентерет те...**

* * *

**– Пирĕн ресторан чапĕ тата мухтавĕ – тимĕршапа! – мăнаçланать хуçа клиент умĕнче.**
**– Пĕлетĕп, – типпĕн хуравлать лешĕ. – Вĕсенчен пĕри ĕнер манран саккас йышăнчĕ.**

* * *

**– Пикеçĕм, эсир качча тухнă-и?**
**– Çук, эпĕ сăрланса кăна ĕлкĕреймен.**

* * *

**Автошкул. Преподаватель:**
**– Çул çинчи паллăсем мĕн тума кирлĕ, кам калать?**
**– Водительсен кĕсйисенчи укçа паллисене кăларса илме... – илтĕнсе каять хыçалти ретрен.**

* * *

**– Кино курма ăçта лайăхрах: килте-и е кинотеатрта-и?**
**– Паллах, кинотеатрта – унта чуптума та пулать.**
**– Килте те пулать.**
**– Мĕн эсĕ, килте арăм курать!**

* * *

**– Эсир çĕнĕ хваттере куçнă терĕç. Çитменлĕх нумай тупрăр-и вара?**
**– Хальлĕхе – пĕрре кăна.**
**– Уй, мĕнле аван! Мĕнле çитменлĕх вара?**
**– Алăк уçăлмасть. Шала кĕрсе те курайманăмăр-ха.**

* * *

**Окулист пÿлĕмĕнче – призывник. Тухтăр:**
**– Эпĕ мĕнле саспалли кăтартатăп?**
**– Эсир ăçта?..**

* * *

**– Сирĕн уйăрмра миçе çын ĕçлет?**
**– Пуçлăхпа пĕрле – çирĕм.**
**– Пуçлăхсăр вара?**
**– Пуçлăхсăр пачах никам та ĕçлемест.**

* * *

**– О! Иванов! Кур-ха: епле улшăнса кайнă эсĕ! Ӳснĕ, тĕреклennĕ, кукша вырăнĕнче çÿç те ÿсме пуçланă... Паллама та çук сана!**
**– Эпĕ Иванов мар!**
**– Мĕскер, эсĕ тата хушаматна та улăштартăн-им?!**

* * *

**– Пĕтĕм шалăва пĕр кунра мĕнле майпа ĕçсе яма пулать-ха?**
**– Атя, укçуна ил, кăтартатăп.**


## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРЎСЕМ

### СУТАТĂП ПРОДАЮ

**2.АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ,** пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 28 руб., 9х20х40 – 24 руб. Высокое качество. Доставка манипулятором. **Т. 8-960-307-31-51.**

**3.АКЦИЯ! ПЕСОК, ГРАВМАССУ,** щебень, керамзит. По низким ценам. Доставка. **Т. 8-960-307-31-51.**

**4.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер. Доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидровибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7.ГРАВМАССУ, ПЕСОК, щебень, керамзит,** чернозём. Дёшево. Доставка. Т.: 8-903-358-17-70, 8-927-668-97-13, 38-97-13.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Дёшево. Доставка. Т.: 89033583021, 44-30-21.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**17. Песок, гравмассу, керамзит,** чернозём, **навоз.** Доставка. Т. 8-905-197-40-19.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 89176757528.

**22.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 89278558355.**

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ,** косилки, **сажалки,** копалки, **окучники, опрыскиватели.** Доставка. Т. 89278533596.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **к/кольца.** Доставка. Т. 89033468556.

**29.Опрыскиватели, окучники, косилки,** грабли, погрузчики, доильные аппараты. **Распродажа!** Доставка! Т.: 8-937-955-98-02, 8-937-375-80-95.

**30.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**31.Гравмассу, песок, керамзит,** кирп. бой. Д-ка. Т. 89033225766.

**37.**Ворота, калитки, **заборы,** навесы. **Ковка,** кровля, обшивка сайдингом. Общестроительные и сварочные работы. Замер. Д-ка. Установка. Гарантия. **Пенсионерам – скидки.** Т.: 8-902-288-14-47, 38-75-74, сайт:metalservis21.ru

**41.Гравмассу, гравий, песок** речной, карьерный; **щебень,** керамзит. Д-ка. Т. 89278404595.

**48.Керамблоки, бой** кирпича, бетона; сваи, **ОПГС,** песок, **ФБС.** Т. 89063814420.

**58.Гравмассу, щебень, песок, керамзит,** бетон, чернозём. Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**59.ТЕПЛИЦЫ от производителя.** Низкие цены. Т. 48-16-54.

**65.Песок, гравмассу,** бой кирпича, **щебень** известк-й, чернозём. Т.: 89196567752, 89093005705.

**66.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Уч-м ВОВ и пенсионерам – **скидки.** Т. 89176769379.

**74.Керамблоки** вибропрессованные, пропаренные. Все размеры. Доставка. Т. 89176776846.

**89.БЛОКИ керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. Т. 89373866629.

**123.Гравмассу, песок, навоз.** Доставка по старым ценам. Т. 8-927-850-28-21.

**127.ТЕПЛИЦЫ из поликарбоната** от производителя. Т. 8-919-679-47-04.

**128.ТЕПЛИЦЫ из поликарбоната** от производителя. Т. 8-927-667-62-02.

**133.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производителя около 100 видов, **сетку** сварную, кладочную, штукатурную; **проволоку,** столбы. Доставка. Т.: 68-30-45, 8-937-952-22-11.

**138.ОКНА, ДВЕРИ. Обшивка.** Замер, доставка, демонтаж бесплатно. **Гарантия** 15л. Т. 89196624097.

**170.Профнастил, металлочерепицу, сайдинг.** Т. 89033220479.

**172.Тротуарные ПЛИТЫ, брусчатку.** Доставка, укладка. Скидки. Гарантия. Т. 89033220479.

**180.Комбикорм, зерно, отруби,** муку горох-ю. Д-ка. Т. 89373916016.

**183.**Окна Чувашии. **ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, жел. двери.** Т. 89050281182.

**205.Цемент,** песок, **гравмассу,** щебень, **керамзит, блоки.** Д-ка. Т.: 89278497675, 89278497674.

**295.Песок,** ОПГС, **щебень,** известь, асфальтную крошку, **навоз,** землю, **торф.** Доставка. Т.: 89196741016, 89603003816.

**322.ПЕСОК, щебень, гравмассу, керамзит.** Д-ка. Т. 89033220479.

**358.Торф,** навоз, **ОПГС, песок** /речной, карьерный/, **щебень,** керамзит, бой кирпича, чернозем, асф. крошку. Пенсионерам – скидки. Т. 89278680644.

**361.АКЦИЯ! КОЛЬЦА** железобетонные для колодцев и канализаций 0,7; 1; 1,5м. Бурение. Д-ка манипул-м. Т. 89603073151.

**364.Пластиковые ОКНА, ДВЕРИ.** Замер - бесплатно. Пенсионерам – скидки. Т. 89278447811.

### ТУЯНАТĂП КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Т. 8-962-599-47-06.

**39.Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**109.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 8-937-014-49-97.

### ПУЛĂШУ УСЛУГИ

**38.ЧИСТКА КОЛОДЦЕВ.** Т. 8-961-342-90-59.

**51.Бурение колодцев,** скважин, **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

**171.Кровельные, фасадные работы.** Т. 8-903-322-04-79.

**197.Бурение скважин на воду.** Опыт, качество. Т. 89656876888.

**246.Бурение скважин** на воду. **Чистка** старых **скважин.** Т. 8-906-381-60-37.

**342.Доставка:** навоз, торф, чернозём, сыпучие материалы. Доставка. Тел. 8-919-650-39-91.

**343.Доставка:** ОПГС, песок /речной, карьерный/, щебень, асфальтная крошка, керамзит. Тел. 89196503991.

**379.Кивелнĕ электропроводка – пушар хăрушлăхĕ.** Ялти çуртсенчи электропроводкăна çĕннипе улăштаратпăр. Материалĕ хаклă мар. Тел. 8-937-015-35-40.

### ĔÇ РАБОТА

**297.Требуются каменщики, монолитчики** в Москву. Оплата своевременная. Т. 8-962-321-70-11.



**«ХЫПАР»**

Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ**

**Директор – тĕп редактор В.В.ТУРКАЙ**

ЧĂВАШ ХĔРАРĂМĔ

**Сыранмалли индекс: 11515**

**Редактор – М.М.ИЛЬИНА**

**Дежурнăй редактор – Т.Н.НАУМОВА**

**Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службы 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.**



**РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ:** 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ

**ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ:** 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

**Факс:** /8352/ 28-83-70, 56-20-07

**Электрон почти:** hypar@mail.ru



Хаçатри рекламăсăр тÿлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшÿллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Номере 10.06.2015 алă пуснă. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 8198. Заказ 2209.